К С(4УВ)
Э 67
0724.4УВ

Василий Энтип

АЛĂРИ АСАМАТ

Национальная библиотека ЧР
4-020724

М 20724.чув

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

КТ
К С(4Чв)
Э 67

Василий Энтип

АЛĂРИ АСАМАТ

ПРОВЕРЕНО
2010

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР — 1976

ЧГУ - 257052

м 20724-44В

республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

Эпир - Çĕрпе Хĕвел ывăлĕсем...

Кĕтĕвĕмпе каçчен ял тавра çӳрерĕм — Çĕр тавра çаврăннăн туйăнчĕ... Кунĕпе тăри-юрăçăн этем ăнкарса çитейми асамлă вĕçевне сăнарăм: мĕншĕн вăл — Çĕр кайăкĕ — тӳпенелле канăçа пĕлми ăнтăлса вĕçет? Мĕншĕн— юрласа-йĕрсе тенĕ пек — çерем ешĕллĕхне çиçĕм пек çиçсе анать?.. Уçлăхран илсе килмен-ши ăна Çĕр çине? — тĕлĕнсе, хыпăнса ӳксе шухăшларăм вара... Тен, унăн асĕнче — нихçан манăнми тăван çĕршывĕ, тăван кĕтесĕ... Тен, вĕçевĕ унăн — ĕмĕрхи тунсăх туртăмĕ, юрри — тертлĕ тунсăх юрри?..

❁

Çунаттине çупа-çупа, хавхаланса юрла-юрла
Тăри вĕçет тӳпенелле —
Çӳлтен çӳле, çӳлтен çӳле.
Пĕр выränта вĕçсе, юрлать: Ах, çĕр юлать! Ах, çĕр юлать!
Анчах тӳпе чĕнет, чĕнет —
Вĕçевçĕ шиклĕхне çĕнет.
Çунат çупса вĕçет тăри — çӳлтен çӳле, çӳлтен çӳле.
Епле аван ăна вĕçме —
Тӳпе тĕпсĕрлĕхне виçме!
Пăхса илет вăл çӳлелле — курать чĕнӳллĕ хĕвеле.
Пăхса илет те çĕр енне —
Тем пăчăртать ун чĕрине...
Анчах та чăрсăр вĕçевпе вăл чарăнмасть-ха киленме!
Пӳлĕниччен янрать юрри,
Ӳпĕниччен вĕçет тăри.
Вара — ӳкет çĕр ытамне... кăшт сывлăш çавăрса илме.
Унтан — татах тӳпенелле,
Çӳлтен — çĕре, çĕртен — çӳле.
Çĕр хут, пин хут — иртен каçчен, çуркуннерен кĕркуннеччен...
Телей-ши е асап-ши ку?
— Çунатлă çын, ку — сан шăпу.

— Этем килĕшӳлĕх, илем, вĕҫсĕрлĕх, халăхпа хăй ҫинчен шухăшланăҫем поэзи тĕнчинче ăсне, чун-чĕрине хумхантаракан, тертлентерекен е тĕлĕнтерсе хавхалантаракан ыйтусене хирĕҫ ĕмĕр-ĕмĕр явап шырĕ,— терĕн эсĕ, кĕнеке уҫса...

❁

Этем,
Кам эс? Миҫе ҫулта?
Пике-и, арăм-и, хăюллă каччă-и, вăй илнĕ ар-и?
Куҫу йăмăхасла хаваслă чух
Эп сан пӳртне кĕместĕп:
Нушасăр пурнăҫу пехетлĕ чух
Сана эп кирлĕ мар пачах...
Ĕмĕтленсе-тунсăхласа ҫунакана —
Пике-и эсĕ, арăм-и, хăюллă каччă-и, вăй илнĕ ар-и—
Ăшшăн чĕнĕп
Суя сăмах-юмахсăр шанчăк тĕнчине,
Туссем нумай ҫĕре.
Чи йывăр самантсен хурланăвне унта эп лăпкăн ҫĕнĕп,
Кĕтсе ывăннине вăй парĕ манăн тарават чĕре.
Пĕрремĕш тĕлпулу тасалăхне
Пăр ҫапнă йĕтĕн ҫӳҫлĕ инкене асилтерсе сасартăк,
Ҫапăҫура пуҫ хунă тусĕпе пĕрле эп кĕрĕп ун асне...
Хăйне шанман, хавшанă ар ҫунаттине вар! сартăр—
Ҫĕн юрату ҫăлтăрĕпе ҫутатăп ун кичем пĕчченлĕхне.
Кулянакан хĕрарăма
Хĕр чухнехи тĕлĕкĕпе вăтантарса-ҫӳҫентерсе йăпатăп,
Вĕри тăварлă куҫĕнчен хĕвел пек чуптуса.
Шурсухала,
Ҫамрăклатса,
Чĕвен тăрса кĕҫенекен ҫилҫунатпа хăй яшлăхне ăсатăп—
Ҫӳретĕр вăл унта ҫут ĕмĕт туртăмне туйса...
Ҫурхи ăшша,

Кĕрхи сивве,
Çу кунĕн ăршине те,
Шур çил-тăманлă хĕл хӳтсĕрлĕхне те —
Хăшне ху кăмăллан —
Пĕр самантра çитерĕп сан патна...
Пыл çунă ир шăршиллĕ сăвă тĕнчине сана чĕнетĕп —
Уç унăн асаматлă чатăрне,
Кĕр ӳркенмесĕр,
Вăратса чунна.

Çĕр çухрăма яхăн машинăпа, çирĕм çухрăм çуран килтĕмĕр. Ял хĕрринчи улăха кĕретпĕр — шăнкăр-шăнкăр валак патне: кунти пек тутлă шыв тĕнчере тек çук пультен, ăна ĕçсе ӳснĕрен?..

Чул тыткăнне çĕнтернĕ çăл шарлакĕ
Ташлать тута кăварĕ ăшшинче.
Пăшăлтататăп: — Юх, ăша — шала — кĕр,
Сăмах пек ан пăрлан шăл хушшинче...
Вăйран ярать ĕçес килнин асапĕ.
Вĕри чул евĕр çурăлать чĕлхем.
Çĕр сĕтекне çине-çине ăсап эп —
Çăвар ăшне хĕртме пуçлать хĕлхем.
Чĕре патне çывхарнăн сиплĕ нӳрĕ,
Иртсе кая пуçланăн ăш пиçни
Туйса илетĕп: эпĕ — чĕрĕ... Юрĕ! —
Сиенлĕ пулĕ ытлашши ĕçни.
Анчах... ĕçетĕп — сыпкăм хыççăн сыпкăм.
Мĕн чул ĕçсен те чун канмасть-çке ман.
Çăл шывĕ те чакмасть... Чим, эпĕ — хыпкăн —
Ĕçетĕп мар-ши океан?
Те юрату, те пурнăç ку? — ăнлан...

— Чăнах та вăл готика стильне асилтерет,— терĕ шăратнă пăхăр чĕркуççиллĕ, тинĕс куçлă мулатка вырăсла, кăвăлти акцентпа... Пирĕн енче... кун пек илем çук-ха, анчах...

— Умне пальма çулçисем сарсан, аванччĕ,— терĕм эпĕ, тюльпан çыххисен çумне канма ларса... Шуманăн «Илемлĕ ĕмĕтсем» кĕвви илтĕнме пуçланă пек туйăнчĕ — титан монумент ăшĕнчен, çӳлтен... таçтан...

❁

Илемлĕн виркĕсленнĕ çулăмра
Хăватлăн ăнтăлса уçлăхалла,
Мăнаçлă монумент ларать умра,
Ун пьедесталĕ — çăлтăрлă хула.
Титан ракета шĕвĕр вĕçĕпе
Тĕлленĕ тимлĕн Кайăк хур çулне —
Çĕр туртăмне çĕнтернĕ вĕçевпе
Сывлать, варкăштарса тĕнче çилне.
Титан тĕкĕрĕнче — кĕрен шевле:
Кăвар пас сăрнă Кремль çăлтăрне.
Тĕтрелĕх, мĕлтлетсе юр пĕрчилле,
Ун çийĕн карнă хĕмлĕ спиральне.
Вĕçсĕрлĕхпе тавралăх чиккине
Пытарнă вутлă тĕтĕм пек тĕтре,
Тĕсне улăштарса, кăшт чӳхенет...
Инçет — умра, умри халь — инçетре.
Курнать пек вăхăт хăвăрт улшăнни,
Кивелнĕ çăлтăрсем тусан пулни
Пăр тĕслĕ монумент кристалĕнче:
Ун ăшĕнче, тен, хирĕçле тĕнче?..
Ак ман енне чăрр пăхрĕ пĕр этем —
Ман пек те вăл, ман пек те мар вуçех.
Ун ӳчĕ витĕр пайăрка хĕлхем
Сип-симĕс йĕрĕ хăваçса вĕçет.

Тен, вăл — нейтрино? Е — уçман çĕн пай?
Тĕпче, этем,— самант шăвать вăрах.
Тен, шухăшу пĕлӳлĕх ӳснĕ май
Вĕçейĕ çутăран та хăвăртрах...
Иртеççĕ çăлтăр пуххисем шуса
Ман еннелле, ман витĕр, ман хыçа...
Пĕр шиклĕ туйăм чĕрене шăнтса
Çуралчĕ те ӳсет... Тартас куçа!
Хăрушă тĕлĕк курнă хыççăнхи
Хаваслă вăрану пек çак самант.
...Шап-шурă юр çинче — чечек çыххи.
Чечек тавра — вут-хĕмлĕ асамат.
Вĕсен çути хĕретнĕ никĕсе:
Уй-хир тюльпанĕсем шанман, хитре.
Ларать шур çӳçлĕ гени тĕлĕрсе.
Ик куçĕнче ун — çăлтăрлă тĕтре.
Çӳлте — ракета шĕвĕр вĕçĕпе
Тĕлленĕ тимлĕн Кайăк хур çулне,—
Çĕр туртăмне çĕнтернĕ вĕçевпе
Сывлать, варкăштарса тĕнче çилне.
«Килет кĕрлевлĕ, кăткăс самана»,—
Титан хыпарçă систерет пире.
Килсемччĕ! — тетĕп, хумханса, ăна.
Анчах та темшĕн канăççăр чĕре.
Мĕскер илсе килет вăл çын валли:
Мĕн — ыррине? Мĕн — хуррине?
...Çутатрĕ çăлтăр — пулассин палли! —
Мăнаçлă монументăн тăррине.

Хĕл хушшинче кун пек юмахла илемлĕ каҫсем ытла сахал пулаҫҫĕ — тӳперен ҫăлтăр ҫăвакан сенкер каҫсем... Вĕсенчен пĕри ĕмĕрлĕхе асра юлать — унăн ҫăлтăрлă шевли вара пурнăҫри тĕксĕм каҫсенче те умра, чунра йăпатуллăн та ăшшăн йăлкăшать...

Эп иккĕленместĕп кун пирĕки —
Асăмра ку юлĕ ĕмĕре!
Чăлтăр-чăлтăр ҫăлтăр йăлтăркки
Тӳперен вĕҫсе анать ҫĕре.

Вĕлтлетсе илсе, юр пĕрчисем
Ҫаврăнаҫҫĕ уйăх ҫутинче.
Ӳснĕҫемĕн ҫăлтăр кĕрчĕсем
Юмахла илемлĕ ҫут тĕнче!

Уҫлăх тăкнă ҫутă пĕрчĕре
Симĕсĕн-кăвакăн вут ҫиҫет.
Йăмăхать куҫ, пăхнăн пĕр ҫĕре.
Ĕмĕлтет йăлтах — тавра, инҫет.

Эрешленнĕ те хрусталь йăмра
Вутлă-хĕмлĕ кăпăшка паспа
Ҫăлтăрлă шевле сапать умра.
Ҫăл сывлать хĕлхемлĕ шур пăспа.

Утнă май хавасланса киле
Ҫутă пайăрки пек шур ҫулпа
Ҫăлтăр чăлтăркки иле-иле
Пит ҫине сапатăп ывăҫпа.

— Итлесем, ытарайми тĕнче,—
Тек никам ан пĕлтĕр — ту тупа:
Кĕҫĕр Илемпи тути ҫинче
Ҫăлтăрсем сӳнтертĕм тутапа!

Ывăннă сунарçăсем эрех лĕрккеççĕ, тавлашаççĕ, мухтанаççĕ... Ши! шăхăра-шăхăра йыттисене шăмă персе параççĕ... Тӳпесĕр вĕçсĕрлĕхпе тĕпсĕрлĕхе сасă кайăкĕсене вĕçтере-вĕçтере, саксофон ӳлет... Эпĕ, пăшала турат çине çакса хăварса, сунарçă çурчĕн сивĕ çутинчен тĕттĕмелле таратăп...

❁

Каçхи хуркайăк-çулçӳревçĕсем
Кикак! кикак! тесе салхуллăн
Çĕр çийĕн çаврăнаççĕ сивĕ, тĕксĕм тӳпере:
Пит ывăннă пулас —
Сасси вĕсен тухать тӳсме çук хурлăн,—
Те пулăшăр! тесе тархасласа чĕнеççĕ
Кайăксем пире?..
Мĕн пулнă вĕсене?
Тен, çăлтăрлă вĕçев çулне çухатнă,
Кĕрхи юр-пăрлă пĕлĕтсен çил-тăвăлне лексе?
Хастар ертӳçине, тен, ăнсăртран амантнă,
Шап-шур çунатăн юррине шеллевсĕр вĕçлесе?
Е типнĕ кайăксем юратнă кил пек хăтлă кӳлĕ
Эпир кĕрлевлĕ, шавлă пурнăçра тирпейсĕрне пула?..
Е каннă вăхăтра такам хăратнă вĕсене каçкӳлĕм,
Тăван çĕр ăшшинчен хăваласа ярса хура уçлăхалла?.

Каçхи хуркайăк-çулçӳревçĕсем
Ют сăпкари пепке пек макăраççĕ.
Мĕнле эп пулăшайăп тӳпери аташнă туссене?
Куçран чиксе те курăнми
Сив çиллĕ, юрлă-çумăрлă кĕр каçĕ
Вăр-варрăн сӳнтерет эп чĕртнĕ кăвайтсен çутисене.
Ӳтпе, чунпа кӳтсе çитсе,
Куç алчриччен тĕттĕмелле пăхса итлетĕп:

Е сывăхра туссен сасси,
Е — инçетре, çӳлте...
Хуркайăк çулĕ тӳпере палăрасса хыпса-çунса кĕтетĕп,
Анчах — пĕр çăлтăр курăнмасть вăл йăлкăшас тĕлте...
Салху сасăсене илтми пулсан,
Ирхи тĕнче инçечĕ
Самантлăха çех палăртрĕ хуркайăксен çулне.
Аташнă çулçӳревçĕсен арпашнă картине
Шыраăм пур енче те —
Шап-шур тĕк-мамăк сиввĕн вĕçрĕ ывăçсем çине...

Кăпăшка юрпа витĕннĕ улăм тăрăллă, хĕрлĕ пăр чӳречеллĕ, йӳтенĕ автан сассиллĕ кивĕ ял... Шурă тĕтĕмлĕ çул...

Çĕр тавра вĕçет, ӳлет
Кусăрка-юка.
Тунсăх... Ман каяс килет
Кĕçĕр аякка.

Çилçунатлă урхамах.
Кĕленче çуна.
Ванчĕ алăк — шур хăма,
Хускатса чуна.

Юр сапса мĕнпур енчен
Ан хăрат, тăман:
Çичĕ кашкăр тирĕнчен
Ăшă тăлăп ман.

Тĕттĕмре — вăрман, уй-хир.
Сулăнкаллă çул...
Каччăн темшĕн çук ыйхи,
Канăçĕ те çук —

Кайманран куç умĕнчен
Ĕмĕтри пики
Шухăшлать вăл çул çинче
Акă мĕн пирки:

«Хăш ялта эс, хăш килте —
Кантăк умĕнче —
Хурланса мана кĕтен?..
Кĕт! Эп çул çинче.

Хирĕç тух, шăнкрав юрри
Илтĕнсе кайсан.
Таврăнасшăн пул юри,
Ял хыçа юлсан...»

...Çилçунатлă урхамах
Тухнă çул çинчен.
Илтĕнет ачаш сăмах
Тăлăп айĕнчен.

Эпĕ — хама-хам вăрттăн сăнакан, сывлакан тумлам... Тĕсне вĕçĕмсĕр улăштаракан çулăм евĕрлĕрехскер... Шухăшлакан тумлам... Сасартăк Çĕр чăмăрĕнчен вĕçерĕнетĕп те — метеор хăвăртлăхĕпе вĕççĕрлĕхĕн хура пуссине сирпĕнетĕп... Мана Çĕр кăвапипе çыхăнтарнă чĕрĕ тымар ак-ак татăлас пек çинçелсе-çинçелсе пынăн ăшăмра — шалта-шалта — этем тӳсейми ырату ӳсме тытăнать... Ак — çиçĕм сĕвемĕ евĕр тымар хĕлĕхрен те çинçе... Ак — татăлать! Татăлать те! — ?!. Çав самантра... тăн пырса кĕрет. «Лерен... тавраçнчĕ»,— илтетĕп врач сассине.

❁

Чăваш ун чух вĕçсĕрлĕхре вĕçетчĕ.
Те намăс пулчĕ тĕлĕрсе выртма —
Нӳрелнĕ асфальта хуллен виçетĕп.
Туя — ман тус: пĕччен кичем утма.
Çап-çут цехсем çул хĕррине юлаççĕ.
Сенкер пĕркенчĕк айĕнче хула.
Нихçанхинчен илемлĕрех пек каçĕ —
Те уçлăхра тăван пурне пула...

Ял еннелле çывхарнă май илтетĕп
Çынсем хĕрсе кайса калаçнине.
Мĕскер ку, çур çĕр иртнĕ ĕнтĕ, тетĕп,
Ĕçчен этем хупман-ха лаççине?
Кĕр çитеспе хресченĕн пур-тăр ерçĕ:
Лараççĕ улттăн-çиччĕн пăлтăрта —
Тĕтресĕр уçлăх сăрине ĕçеççĕ
Тӳчме пуçланă Алтăр çăлтăртан...

Картишсенче пирус çути куратăп.
Такам, пăхса яр уçă кантăкран,
Арăмĕпе вăрçать: «Эрне çывратăп
Кайран... чăваш ансассăн уçлăхран!..»

Каçхи хура хире илем кӳмелĕх
Капан тăрне хĕм сапнă-ши вара?
Çемçе хӳреллĕ уçă çилĕ меллĕн
Юс евĕр шăлкăнса пырать çумра.

Çавал хĕрри çап-çутă — çар канмасть-ши
Кунта, ĕлĕкхилле кăвайт чĕртсе.
Пароль-мĕн ыйтасса кĕтсе тăмастăп:
— Аван-и? — тетĕп, вут умне иртсе.

— Шӳрпелĕх те пулин лекет-и пулă?
Е хулккăр хускалмасăр сывăрать?..
Хăмăшсене авса кĕрлерĕ кулă —
Шампа-ши шампăрт! чăмрĕ авăра...

— Андрияна çул кăтартатпăр,— терĕ
Пĕр каччă, тустарса вучах вутне.
— Çӳлте çĕр çутисемсĕр... тунсăх ерĕ —
Çавал çаранĕ курăнтăр куçне...

Эфир кĕрлевĕнче — паллана сасă:
«Пурте йĕркеллĕ! Çĕр — куç умĕнче!..»
Епле эп сыврăп, сывăрмасть пулсассăн
Этемлĕ уçлăх, ял, çĕршыв, тĕнче!

...Тул çутăлать. Сĕрлет хаваслăн Шуршăл.
Аннуш инке ĕне сума тухать.
Тăп чарăнать те — канăççăррăн, шухăшлăн,
Куçне шăлса, тӳпенелле пăхать...

Эппин, васкас киле — ĕçрен те юлăп.
Калатăп утнă май: — Ан пул салху,
Чипер ан çĕр çине, вĕçевçĕ улăп,—
Сана кĕтет вăраннă халăху.

Хĕллехи вăрманăн шухăшлă кĕввине итлеме пĕлекенсем — телейлĕ. Вĕсем шăплăх пуррине ĕненмеççĕ... Вĕсен чунĕ те хăлхаллă, куçлă... Вĕсем килĕшĕве килĕшӳсĕрлĕхрен уйăрса илме пĕлеççĕ...

❁

Ĕнер анчах çак вĕтлĕхре тĕтреччĕ.
Уяв мунчи кĕр хутнăччĕ пулас.
Турат вĕçне юхса анса чĕтретчĕ
Вĕри тар евĕр йăлтăркка тумла.
Паян çӳхе çурхах пăрпа пĕркеннĕ
Тин çулçă тăкнă çамрăк йывăçсем.
Сивви тумласене тивмен — хĕрхеннĕ:
Турат çинчех пăр шăрçисем вĕсен.
Тăп чарăнса, çак илеме курсассăн,
Тăратăп эпĕ вĕтлĕх хĕрринче.
Сасартăк... Чим, ăçтан тухать ку сасă?
Чинь, чинь! Чинь, чинь! — вăл янăрать çинçен.
Ку — шухă çил-мĕн вĕтлĕх витĕр иртнĕн
Туратсене ачашшăн сĕртĕнет.
Çав самантра чĕрем, тем сиснĕн, илтнĕн,
Ĕнтĕркеме пуçлать... Ăшша чĕнет...

м 20724-44в

Чувашская
республиканская
БИБЛИОТЕКА
им. М. ГОРЬКОГО

«Епле хĕн этеме çак çĕр çинче...» — тесе каланă пирĕн космонавт, ансассăн уçлăхран. Вăл, тĕршĕнсе, сивĕнекен карап умне тин аннă, виç утăм тунă та — йăлт ĕшенсе, вайкăнан çерем çине йăваннă. Йăл кулнă, тунсăх куççульне çĕнсе...

...Пĕр кивĕ, ятсăр шыв трамвайĕпе
ГЭС пĕвине курма каятпăр.
Кĕрхи çанталăк сивĕ те йĕпе.
Тумла юхать чарусăр, йăпăр-япăр.
Хумсем явса шăватпăр майĕпен.
Часах... пĕр ăшăха кĕрсе ларатпăр
Руль тытнă капитан айăпĕпе.
Йăвашшăн — шăлсăр ватă куллилле —
Шевле çиçет шӳт хыççăн йăлтăр-ялтăр...
Ĕçчен трамвай пире силле-силле
Туртăнкаланăн пĕтĕм вăйĕпе
Пирус чĕртсе ярса сăмах пуçлатпăр,
Хисеплĕ хăнана паратпăр ыйтусем.
Вăл — космонавт,
Вăл — паттăр,
Эпĕр — ятсăр,
Çапах та — сăлтавне кура — туссем...
Кĕрхи çанталăк сивĕ те йĕпе —
Хăна çӳхе çар тумĕпе,
Погонĕсем çех генералăн.
Ик ылтăн çăлтăр тĕксĕмленнĕ, тарлă.
...Хĕн пуль çав уçлăха вĕçсе тухма:
Вĕçевçĕ тăнлавне титан пас сăрнă.
Кăшт именетĕп куçĕнчен пăхма —
Вăл вĕçсĕрлĕх пек тĕпсĕр,
Çăлтăр сăнлă.
«Лар çумнерех — кăшт ăшăт. Е — хăран?

Вăл — çын... Курсам, епле вăл ĕнтĕркенĕ,—
Тумтирĕме сĕнме хăяйманран
Хама вăрçатăп вăрттăн.— Тен, тиркемĕ...»
Тӳнкке пуçларĕ пăр трамвай тăрне.
Çил алăка уçса лăкарĕ вирлĕн.
Тав тимлĕхлĕ обком секретарьне —
Юпăнчипе тусне вăл ăшшăн витрĕ...
«Епле хĕн этеме çак çĕр çинче»,—
Тесе калана космонавт ытарлăн,
Ансассăн уçлăхран... Халь — хулĕнчен
Ана ар тусĕ ăшшăн ыталанă,
Хупăрласа тӳпе пусăмĕнчен...
Тăраççĕ хулпа хул, пĕрле вĕсем —
Çĕрпе Хĕвел ывăлĕсем —
Пĕлĕтсене йăтса,
Сивве çĕнсе...

Хумсем таçта васкаççĕ чӳхенсе.

Çирĕм миллиграмм титан çын ӳтĕнче... Ăçтан? Тен, панă çутçанталăк, çут тĕнче?.. Хĕвелĕн спектрĕнче пур ун йĕрри, вăл — çĕр тупри, ăна упрать планетăсен «тăпри»... Сывлăшпала пĕрле çăтатпăр уçлăх тусанне — титан ларать çын ӳпкине... Ӳсет ӳтри титан пурна киле — çак мĕскертен килет?..

Тăпра тыткăнĕнчен хăтарнăскер,
Вутра шăратнăскер,
Туптанăскер,
Епле эс çирĕпчĕ, титанăм?
Мĕн пулнă халь сана —
Мĕскер
Шатралатса-çĕртсе шăтарнă?
Çунатчĕ эсĕ — тĕкĕр питӳпе
Йăлтăртатса илеттĕн çутă ӳкнĕн.
Сана чĕнетчĕ вĕçеве тӳпе —
Унта чылай эс кĕмĕл çĕвĕ пӳкнĕ.
«Мĕн титана суранлатма пултарĕ?! —
Мухтатчĕç.— Ку металл пин çуллăха!
Тавралăх кирĕкĕ е самана тăварĕ
Ăна хăртаймĕ...» Шаннă кăлăха!

...Ак халь,
Тăпра пулма тытăннăскер,
Çĕрсе хуралнăскер,
Тутăхнăскер,
Тĕпчевçĕ умĕнче выртатăн...
Мĕн пулнă-ши сана? Пĕлтер.
Тен, эс трагеди тӳснĕ татăк?
Çапла вилет-мĕн ывăннă металл.
Епле хăрушă тутăх чирĕ!

Чĕртеймĕ титана текех сунтал,
Пулаймĕ тепĕр хут вăл çирĕп...

Тавралăх кирĕкĕ е самана тăварĕ...
Епле сыхланăп эпĕ вĕсенчен?
Мĕнле эмел мана çăлса хăварĕ
Чуна аркатакан вируссенчен?
Кунçул кĕрлевĕнче хавшанăран,
Ывăннăран
Аран-аран .
Çунатсене хăш чух саратăп —
Хăлат пек ярăнса,
Çил-тăвăлран
Аяккалла — лăпкăлăха — таратăп...
Кĕрешӳре çунма çуралнăскер,
Ĕçре пиçĕхнĕскер,
Хăюллăскер,
Çунатсене ниçан та усмăп, теттĕм.
Мĕн пулчĕ халь мана?
Мĕскер
Çапла хавшатрĕ? — шухăшлатăп тертлĕн.
Сисетĕп эп: хăрушă тутăх чирĕ
Пуçлать мана шалтан хăртма-çĕртме.
— Çĕнел, ӳтри титан,— туптан, пул çирĕп,
Пар хевтĕне халсăрлăха çĕнме!
Епле мана халь вăйлă туртăм кирлĕ
Илĕртӳсен тыткăнĕнчен тарма...
Ĕмĕтĕмри çĕршывăм ностальгийĕ,
Хавалупа çĕкле çунатăма.

«Эпĕ — кĕрешӳçĕ, титан пек çирĕп. Эпĕ — вăйлă, хастар, тӳсĕмлĕ-чăтăмлă. Çил-тăвăла та, сивве те, пурнăçри йывăрлăхсене те нихăçан та парăнас çук!» — теттĕн эс час-час... Арăму — ачаш та чечек пек черчен хĕрарăм— тусупа тухса тарчĕ те... куççульне тытса чараймарăн... Çулталăкран сана ăсатрăмăр...

Шур Атăл варринче — вучах пек пĕр утрав.
Ун хăйăрĕ вĕри — ӳтне хĕлхемĕ ĕнтĕ.
Ун ĕнчĕ хăвисем, кăларнă пек вутран,
Илеççĕ чăшлатса, тумлам шыв сирпĕнсен те.
Саваççĕ утрава хумсем — ювелир пек
Сар ылтăн хăйăрне суйлаççĕ пĕрчĕн-пĕрчĕн...
Утрав çинче пĕччен çӳретĕп пĕр йĕрпе —
Ак пуçăм çаврăнать, ура тупанĕ хĕрчĕ.
Вара — кулса-йĕрсе кĕретĕп те шыва
Выртатăп месерле. Ишсе кайма çук вăйăм.
Ман урлă алхасса хум хыççăн хум шăвать.
Шутлатăп юхнă май: лăплан — чăн мар ку, вăйă...
Ăçта эс, чун савни? Ăçта? Илтсем! Чĕнсем!
Ишсе килсем кунта — часах куçа пăр тивĕ...
Килсем! Пĕр самантрах, шыв ытамне çĕнсе,
Тасалăп хăйăртан... Килсем! Путатăп... Сивĕ...

Ачам, эс пĕчĕккĕ-ха — Çĕр чăмăрне ал лаппи çине хурса ăшăтаймăн...

— Эп — пысăккă! Пысăккă! Пы-ы-ы-сăк-кă!! — кӳренӳллĕн кăшкăртăн эсĕ...

Киввипеле çĕннин чикки, ăçта эс?
Кам паллă тунă-ши сана, юпа лартса?
Эс пур пулсан, сан урлă каçнă чух пуç тайĕç
Çынсем çĕн вăхăта е, палăртса
Хаваслă тапхăра, телейлĕн
Ăсатĕç иртнине: «Сыв пул, курни, кивви!»
Анчах, этем, епле çакна пĕлейĕн:
Кивви ку е çĕнни? Хăшне кунçул кĕви
Çие пуçланă тин?.. Васкавлă вăхăт
Хăшне кăларĕ манăçа, «Ăсан!» тесе?..
Çапла, ĕнер вăйли — паян шăпланнă, вăйсăр.
Çӳлти — çĕрте çĕрет. Унтан сĕтек илсе,
Ӳсме пуçлать çĕрти. Чапли те чапсăр.
Măнкăмăлли сăпайлăланнă та... юмарт.
Теприн чунне халь вăратаймăн чансăр.
Шăпăрттисем — чысра. Салхуллă мар
Тахçан салхуллисем... Çук, пĕр самант та
Нихçан пĕр выränта тăман кунçул —
Вăл çĕнелет пĕр-вĕçĕм... Кам-ха мантăр
Çакна! Сăнатăп та — мĕн чул
Умра çĕнни, ырри хавхаланмалăх!
Çапах та тем — кирли! — çитмест чуна...
Сан пур-и юмахри пек улăп, халăхăм?
Сан пур-и Прометей? Кала мана.

Кивĕ Таллин урамĕсене тĕтĕм аннă. Антиквар — кăлкан çӳçлĕ ватă, манăн гид,— чул сарнă тăкăрлăкпа утнă май юмах ярать. Юптарнă пек те, тĕрĕс пулнинех калаçа панă пек те туйăнать — пĕлсех те çитеймĕн...

Тахçан, авал, ку пулнă имĕш... Чĕмсĕр,
Йӳте пуçланă ват ĕмпӳ-хуçа
Тарçисене пĕлтернĕ: «Ĕмĕр-ĕмĕр
Пурнасшăн эп, сăнпа куçса хурçа...»
Вара — пуçланнă тĕркĕш... Çул иртсен-и,
Илемлĕ кермене, трон çывăхне,
Вырнаçнă хурçă бюст. Хăюллă гени
Сутман искусствăн аслă чăнлăхне:
Ĕмпӳ сăнарĕ, чăн та, тухнă чаплă —
Ăс çех пулман ик шăтăк куçĕнче...
Эшкер чылай çак йĕрĕхе пуççапнă,
Умне йăпăлтилле чĕркуçленсе.
...Часах хуртсен ĕçки-çики пуçланнă
Ĕмпӳн тăхлан керменĕ ăшĕнче.
Улт-çичĕ ĕмĕр хурçă йĕрĕх ларнă
Пĕр кĕтесре... Пĕлмен çакна тĕнче!
Пĕррехинче, тусан сăтăркаланăн,
Такам хускатнă мрамор никĕсе —
Йăваннă йĕрĕх, ӳкнĕ те... саланнă.
Арканнă вăл, шалтан хăрса-çĕрсе...
...Йĕс, тимĕр, хурçă... Хăшĕнчен тăвас ман
Пĕр йĕрĕх ĕненӳллĕн пуç тайма?
Тен, титанран? — Ун чух эс, тутăх, асмăн,
Йăлт аркатса... Çĕн йĕрĕх?! Мĕн тума?..

Этем чĕри чечексенчен черчентерех — тăм тивнĕ пек шанать ун хупăлчи пурна киле. Хаяр сăмах, ултав, элек, шĕкĕсемпе пĕрех, çиеççĕ пурнăç папкине — этем... вилет...

Курни кулянтарса ярсан, кӳтсе çитсессĕн чун,
Хăш чух куçа чавас килетчĕ тарăхса, урса.
Каярахпа, кунçул юххи кӳрсен хĕвеллĕ кун,
Хавасланаттăм, çутăра улшăнусем курса...

Илтни хурлантарса ярсан, чĕрпеклесессĕн ăс,
Хăш чух пуçа ватас килетчĕ шĕвĕр сив чулпа.
Каярахпа, тарăхуран юлсассăн тĕссĕр пăс,
Эп ăнланаттăм: малаллах утатăп, çав çулпа...

Курни-илтни — асра, ăсра. Чĕре сурансăр мар:
Сив çил йĕр хăварать çапла чечек папки çинче.
Куç уçăлчĕ ман тепĕр хут... Ума тĕтре сăрман —
Пулассине курса тăратăп çăлтăр çутинче.

Иккĕленӳ — ăсчах нуши, анчах вутра çунма
Вăл хатĕр, тупнă чăнлăха хӳтĕлеме тăрсан.
Тен, пулĕç йăнăшсем татах... Тăм тивмĕ куçăма:
Ман шанчăк хурăçчĕ тахçан, халь — тутăхми титан.

Хир-вăрманлă, çăлкуçлă-юханшывлă, сăртлă-туллă çĕршывра çуралнă пулин те, чун-чĕремре — темĕнле ĕмĕрхи чĕнӳ, хăватлă туртăм, хăлхара — инçетри-инçетри хумсен чӳхенĕвĕ, шухăшлă шавĕ... Манăн йăхран йăха куçакан вăрлăх тĕввинче — генăра — канăçсăрлăхпа пуласлăх тунсăхĕ программăланнă пулмалла...

Тусанлă, чуллă, ĕнĕклĕ, кăлканлă типĕ хир.
Утмăлтурат. Çаврăçилсем. Пиçен. Ăрша...
Пас сăрнă евĕр усăннă çулпуçĕн тилхепи.
Çăвар уçатăп та — ăша хыпса илет пушар.
Татах, татах ума тухать илемлĕ океан!
Юхма пуçлать, ăсран ярса, хум хыççăн хум —
Хитре, ултавлă курăну... Хавасланса каян,
Вăл палăрсан: ăш хыпнине чакарăн пĕрех хут!..
Анчах та чăн-чăн океан çук мар — вăл ман умра:
Тен, инçетре, тен çывăхрах... Ун сиплĕ нӳррине
Туятăп чун хавалĕпе е вĕрекен юнра
Сисетĕп ун чӳхенĕвне, илтетĕп чĕнĕвне.
Вара — йăлтах чăтма-тӳсме эп хатĕр çул çинче.
Мĕскер вăл маншăн ăш хыпни? — Умра епле тĕллев!
...Çапла эп тухрăм океан умне пĕррехинче.
Ун чух вăл лăпкăччĕ, вăйне çухатнăччĕ кĕрлев.
Çĕрпе шыв чиккине çитсе, эп пăхрăм умалла:
Мĕскер ку? Çак-и океан?! Капашсăр шыв кӳлли...
Йĕпе пăру! — ура тĕпне чĕлхи вĕçпе çуллать...
Эх, йăпăлти! Кăпăкланать, йӳçсе... этем кулли!
Пĕр утăм чакăп каялла — çитеймĕ ман пата:
Ун пур чикки — унтан иртсе каяймĕ ĕмĕрне!
Кам çак кӳлле «вăл харсăр» тет — суять вăл, тупата!
Мăнаçлăн пăхрăм ун çине: пĕл эс кам аслине...
Сасартăк... урчĕ океан! — хумне тӳпе таран

Çĕклерĕ те кĕрле-кĕрле кустарчĕ ман енне.
Вара — пуçларĕ тыллама... Епле ăна чаран!
Мĕн чул эп çăтрăм антăхса ун чух хум тăварне...
Çĕлен пек чашкăра пуçланăн тĕпсĕрлĕх сивви,
Асăрхасан унти чунсен пăр шăллă куллине,—
Йăлтах ăнлантăм!.. Океан шăпланчĕ. «Çын, ан вил»,—
Тесе сурса кăларчĕ вăл мана чулту çине.
...Чылай эп выртрăм мăк çинче типсе, хевте пухса.
Унтан, тăрса, хумсем енне çул тытрăм — халь... пĕлсе
Океанпа этем вăйне... Инçетелле пăхса,
Шутлатăп: тăвăл амăшĕ çак шăплăх пуль, тесе.

Ырă кăмăлпа сисĕмлĕх... Пурнăçра вĕсенчен кирлĕ-реххи тата мĕн пур-ши? Вĕсем пулсан, хĕвелсĕр кун та сулхăн мар, çăлтăрсăр каç та тĕксĕм мар, сивĕ çил-тăманта та çул çухалмасть, шанчăк та сӳнмест...

Пуриншĕн те, пуриншĕн те сана каçарăп эпĕ:
Тапта, куçна хупса, пыл хурчĕ сăхнă нӳрĕ чечеке,
Пăтрат тăп-тăрă çăлкуçа; чĕрем—шимп-шомп! сар чĕпĕ—
Пăрах ăна кăвар ăшне е пиçенпе чĕрке...
Пуçларĕ ăшă хĕм сапма çӳлтен сĕрен кĕперĕ —
Ăна та тикĕтпе сăрла, кĕл сап куç шăрçине,
Сӳнтер каçхи çутăсене, хуш симпыла йӳç эрĕм,
Хăрат кив питлĕх сассипе çурхи юрăсене...

Пуриншĕн те, пуриншĕн те сана каçарăп эпĕ:
Типсе вилес чухне тумлам шыв памасан та — пурпĕрех,
Иртсен те çăлтăр шутĕнчен кӳренӳсен хисепĕ,
Пырсан та хурлануллă самантсен асапĕ ĕмĕре...
Хам шăпампа килĕшменрен ӳпкевĕм ӳсĕ манăн
Е, ĕнтрĕк тунсăхĕ пăвсассăн, килĕ йывăра...
Сан ирĕкӳ — эп сӳниччен пултарнă пек хăтланăн...
Ман вут хăвна тивсе илсен... мĕн тăвăн-ши вара?

— Хăрăк тимĕре тутăх çиет, пăсăлнă çынна — хурт,— тенĕрен эсĕ, THESAVKUS LINGUAE TSCHUVASCHOR UM» * томне уçкалана май... Унтан, куçна йăлкăштарса илсе, кивĕ пӳрт пĕренинче шĕкĕ çăтăртатнине итле пуçларăн...

Тасалăх кирлĕ титана нимрен ытла:
Таса чух çех вăл тӳсĕмлĕ те çирĕп.
Пĕр çур процент ют хутăша пула
Патракланать те — хăрăк тимĕр чирĕ
Ерет ăна, вăл... арканма пуçлать.
Часах... тăрса юлать унран кĕл, кирĕк...
Тасалăх кирлĕ титана нимрен ытла.

Тасалăх кирлĕ этеме нимрен ытла.
Чун-чĕрипе таса этем çех улăп,
Хурт евĕр пытанмасăр хăвăла
Вăл çех кĕрешĕ чăнлăхшăн хăюллăн,
Асаплăн шыраса идеала,—
Ăна авса хуçаймĕ хĕн е хурлăх...
Тасалăх кирлĕ этеме нимрен ытла.

Пĕр çур процент ют хутăш... Шĕкĕ пек ерсе,
Ăса, чуна пăсма пуçлать шелсĕр
Пиртен тăвать сив юнлă лӳпперсем.
Вара... тулли кушеллĕ те тӳшеклĕ
Пурнатпăр канлĕн, суккăра персе.
...Хура хĕвеллĕ пултăр ман элчелĕм,
Ăспа чуна ют хутăш çĕнтерсен.

* Н. И. Ашмарин. Чăваш сăмахĕсен кĕнеки.

Этемлĕх курни, туйни — ман асăмра... Хăш чух авалăх пурнăçăмра пĕрре пулса иртнĕ евĕр куç умне тухать, тин çех вирхĕнсе иртнĕ самант та ĕлĕкхине асилтерет... Е хама темиçе ĕмĕр пурăнса ывăннă пек туятăп, е — пин хут курнине те тин утма пуçланă ача куçĕпе асăрхатăп...

Тавралăха карса илсен каçхи тĕтре,
Кун çутипе сĕм савăшса пĕрлешнĕн
Кăвак пĕркенчĕк витнĕ хŭтлĕхре,
Эп — ĕмĕрхи килĕшĕве пĕлесшĕн —
Аваллăха путатăп ĕмĕтре.
Çăра тĕтре ăшне утса-вĕçсе кĕрсе
Çĕр туртăмне ŭтпе туйма пăрахнăн
Хыçа юлаççĕ иртнĕ ĕмĕрсем...
Ăру вучахĕ умĕнче вăрахăн
Ларатăн пепкŭне эс ĕмĕртсе.
Умра мĕлтлетнĕн тĕрлĕ тĕслĕ курăну
Эс улшăнатăн юмахла асамлăн...
Тен, тĕлĕк ку? Чиперленет сăну
Куçун çăлкуçĕ тĕтререн тасалнăн —
Ак тăрăлать унти ăсу, ăну...
Чакăртатать шăл хушшинче вĕри тусан
Саманасен хăватлă çилĕ вĕрнĕн.
...Ак эп — чура, çунма пуçлатăп пуç усса
Юпа çинче. Ак хурçă хĕскĕч хĕрнĕ —
Ман чĕлхене палач çăлать урса.
Ак сивĕ чул çине ŭкетĕп юн тăкса,
Çŭлте — хăмач ялавлă баррикада.
Ак, ирĕклĕ çĕршывшăн юншăхса,
Сăнчăрсемпе чăнкăртатса утатăп.
Ак — уçлăха вĕçетĕп ăнтăлса...
Çук маншăн канăç — эп ялан кĕрешŭре:

Арҫын эп, ҫĕнтерӳ — ман тĕп тĕллевĕм.
Эп тухăп халăх умĕнче тӳрре
Сан вучахна хастарăн хӳтĕленĕн:
Эс — манăн тус, савни, эс — ман тӳре...
Анчах чĕре чăмăртанса хытса ларсан
Ачашлăхна куллен туйма пăрахнăн,
Куҫ вăрттăн илемне курми пулсан,
Эп, сан ăшшусăр сивĕнсе хăраххăн,
Пăрланăп майĕпен. Унтан...
Эп тĕлĕнместĕп ҫавăнпа, сана ҫумра курсан
Тертре, хĕнре аваллăх витĕр иртнĕн.
...Ак эс — чура. Ак эс ҫунан, пуҫна усса,
Юпа ҫинче. Ак хурҫă хĕскĕч хĕрнĕ —
Сан чĕлхӳне палач ҫăлать урса.
Ак сивĕ чул ҫине ӳкетĕн юн тăкса.
Ҫӳлте — хăмач ялавлă баррикада.
Ак, ирĕклĕ ҫĕршывшăн юншăхса,
Сăнчăрсемпе чăнкăртатса утатăн.
Ак уҫлăха вĕҫетĕн ăнтăлса...
Ҫук саншăн канăҫ — эс ялан кĕрешӳре:
Хĕрарăм эс, чĕрӳ савма пикеннĕн,—
Пин ҫул иртсен те пурпĕрех тӳрре
Эс тухăн, ҫĕнĕ пурнăҫ тĕвĕленĕн.
Мĕн пулĕ сан ăшшусăр тĕнчере?..
...Тавралăха карса илсен кĕрхи тĕтре,
Кун ҫутипе сĕм савăшса пĕрлешнĕн
Кăвак пĕркенчĕк витнĕ хӳшĕре,
Эс — ĕмĕрхи килĕшĕве пĕлесшĕн —
Мана кĕтме тухатăн ĕмĕтре.

— Мĕн вăл — хăйăр,— ыйтрăм эпĕ санран,— ывăçра упрайми, тытса чарайми вĕри хĕлхем-и?..

— Эпĕ,— терĕн эсĕ.— Юхăма, çиле парăннă сӳнекен пĕрчĕ...

...Хăйăр океанĕ
Юрлатмасть хумне.
Ан тишкер — çыранĕ
Тухмĕ куç умне.
Шутăр вут-хĕм пĕрчĕ —
Тух, вĕри тăман.
Чактăр хăйăр кĕрчĕ,
Шăвăнтăр умран.
Ун хĕмне илетĕп
Йĕкĕр ывăçа —
Юхтарса, итлетĕп
Пĕрчĕ-юрăçа:
«Эп — асамлă пĕрчĕ.
Пур манра титан —
Çутипе вăл пĕчĕк
Çăлтăрпа пĕр тан.
Эп санран тарасшăн
Ирĕк пушхире.
Ан пикен, тархасшăн,
Упрама пире...»
Çĕнтересчĕ чĕмсĕр
Хăйăр тыткăнне —
Хăтарасчĕ хĕмлĕ,
Çирĕп титанне...
Саманан йĕс чанĕ
Пачĕ сассине.
Хăйăр океанĕ
Юхтарать хумне.

— Нихçан тӳлесе пӗтереймӗ тивӗç-парӑмлӑ çын эпӗ: Тӑван çӗршывӑма — шанчӑклӑн парӑнса тӑнипе, тӑван халӑха — сӳнми туслӑх туйӑмӗпе, хӗрарӑма — савӑшу ачашлӑхӗпе... тавӑратӑп,— терӗ манӑн тус... Ырӑ, пархатарлӑ тавӑру...

Эпир Çӗрпе Хӗвел ывӑлӗсем —
Кунçул вучахӗн ӑшшинче ӗнетпӗр...
Кӗрр! кӗрлесессӗн вутлӑ тӑвӑлсем,
Мала тухса, кӗрешӗве чӗнетпӗр.

Эпир — Çӗрпе Хӗвел ывӑлӗсем.
Тымар—Çӗрте, тӳпемӗр пирӗн — çӳлӗ.
Сӳнеççӗ тӗлкӗшсе ывӑннисем,
Чӑтӑмлисен çех çӑлтӑр витӗр çулӗ.

Эпир — Çӗрпе Хӗвел ывӑлӗсем —
Кӗрешӳре анчах телей шыратпӑр
Пӗлетпӗр ӗненме, кӗтме... Вилсен,
Тӑм мар, титан пӗрчи пулатпӑр.
Эпир — коммунистсем...

Çĕнелӳ

Триптих

Поэмăсем

Çунатсăр çилармань

— Эй, Дон-Кихот, чар чăрсăр лашуна, тархасшăн!
Вăркăнтарса мăкалнă сăннуна тусанлă çĕр çине,
Тавралăха сăна... Айван-и эс е сĕмсĕр? Тарăхатăн
Татах, ав, такама... Çанталăкĕ, кур, кайнă кĕр енне.
Карт! туртăнса илет çил вĕрнĕçем кив çилармань çуначĕ,
Тата ик-виçĕ çаврăм тăвасла чĕриклетсе.
«Пĕр çăкăрлăх пулин çĕн тырă авăрасчĕ те... кăнасчĕ»,—
Темест-ши хресченле вăл тӳрккесрех? Эс пур, çĕрет тесе,
Ана ишсе-ватса тăкасшăн!

Пур Россинант сан — сăхăм мар, «йĕтреллĕ» экскаватор.
Кирлех-и сăнă та йĕнер, щит кирлĕ-и тата?!
Иш кив çилармане, хуç çунатне — йăлт вантăр...
Эс рыцарь те — Дон-Кихотран айван-çке, тупата!
Çук, щитсăр мар эс! — хурçăран, танк бронинчен, вăл
çирĕп:
Тӳрре тухма пултарăн çийĕнчех — пур директивлă
план...
Çĕр сăн-питне çамрăклатма сана вăл панă ирĕк,
Анчах эс аркататăн илеме...
— Чим, сăмахна суйла!
Мĕн никĕсне хыватпăр?!

Çĕн хуласем, ГЭСсем ӳсеççĕ мар-и улăпла?
Ялта та чул çуртсем тума пуçларăмăр — хăвах куратăн.
Мĕскер вăл, çилармань?! Иртет ун вăхăчĕ — ишер апла...

Епле завод çунат сарать кунта — вăл кирлĕ, вăл —
упрантăр.
Кивви хăрса çĕр пулмасан, çĕнни те çуралаймĕ:
Ку — диалектика. Пĕлетĕн лайăх эс çакна.
— Пĕлетĕп те... Анлан: кивви — çĕннин шур çӳçлĕ
амăш.
— Ку — чăн пуль те... Май çук чакма:
Пит васкатать ГЕНПЛАН...
Ак экскаватор сăннине çĕклерĕ те хаярăн
Йĕтри хупларĕ хĕвеле, сулланчĕ те — ӳкет çунат çине!..
Тен, хам эп Дон-Кихот? — çухăрашатăп:
— Ирсĕр, чарăн!
Çĕр кисренет. Илтетĕп çунатсен шăмми хуçăлнине...
Эп — Дон-Кихот... Эп — сăнăсăр. Эп — щитсăр...
Эп — лашасăр.
Тата... айван пит! Мĕн тăвас? — тăратăп, пуç усса:
Чăнах, мĕскер вăл, çилармань?—лаççи те ун шăв-шавсăр,
Шăлтăртатмасть шалта алтан е валакран юхса
Тухмасть ыр шăршлă çăнăх ярăмĕ...

Хуçать, ватать йĕтре çунатсене шеллевсĕр:
Ĕнер илемлĕскер — ĕренкĕсĕр купа, тусан пулать паян!..
Çĕннин çут сăнарне асăрхасан, хавасланатăн эсĕ.
Кивви арканнине курсан, çухатусен ыратăвне туян.
Асаилӳ асамлăхĕн вăрттăнлăхне эп, тен, уçаймăп:
Тахçан пулса иртни хăш чух тухать ман куç умне.
...Аларманне çаврать инке. Картишĕнчи ачи-пăчи
выçах-мĕн:
Пĕри — хăй чăмăрне ĕмет, тепри — çăка çулçи пек
ывăçне
Пухать пускурăк «чăкăчĕ», çимесĕр...
— Эй, алармань, пĕр ывăç тырăран пасман кĕрпе эс
авăрт,—
Мăкăртатать хĕрарăм... Аларманĕ, выçăскер, шăлне
çиет...

«Пӳлме урайӗ шултӑркана — çапрӑм савӑл»,—
Юрлать ун упӑшки, Тӳсмен. Вӑл — ятсӑр çын, «ие»...
Арман хуçи пуян Аттайӑн çӗнӗ çилармане
Мӑраннӑн та мӑнаçлӑн хӑлаçланать çунаттипе сӑрт
тӳпинче.
«Сӑра курки пек куçлӑ çӑмламас шуйттанӗ»
Ташлать пуль кӑруççей пек çаврӑнан чулсем çинче,
Вара — чӑмать пуль мӑк айне яхӑлтатса вӑл...
Ухмах Урттем, ялти «усал», пӗр пӑт кӗрпешӗн
Чӗлхесӗр ачине арман айне лартма килӗшнӗскер,
Сенӗкӗпе çунатсене юнать...
Улать хӑй кашкӑрла, шала кӗресшӗн.
Армançӑ йыттипе вӗсилетет:
— Хӑрхам, ӗскер!
Хӗрсе пырать лаçра тӑр-кӑнтӑрла шӑв-шавлӑ ӗçкӗ.
Хутран-ситрен илтӗнкелет «вашплохороть» сӑмах.
Арман хуçи-ши е хӑни ун питӗ вӗçкӗн? —
Çухӑрашать:
— Юнпа çӑрсан, çиеп хуран çӑмах!
Эп — хто? Эп — хаспатин, кӗрешӗн!..

Таçта, ял вӗçӗнче, ула пуçлать выç анчӑк.
Яра парать юрра арман хуçи — каппайчӑк,
Пуян Аттай:

Эх, пурнатпӑр пурнӑçне,
Хаспатин!
Авӑртатпӑр тыррине,
Хаспати!
Кӑлтӑр-кӑлтӑр арманне,
Хаспатин,
Хамӑр лартнӑ сӑрт тӑрне,
Хаспати!
Эпир çиер çӑкӑрне,
Хаспатин.

Чухăн хыптăр хывăхне,
Хаспати.
Çак çĕр çинче кам хуçа,
Хаспатин?
Эсĕ, эпĕ — хамăр çав!
Хаспати...
Кив ĕмĕр çилĕ çавăрать çунатсене ӳркевлĕн.
Çурăксене вĕçсе кĕрсе, ӳхлет, чĕлхесĕрскер.
Пуян Аттайăн пурнăçĕ пырать пулас йĕркеллĕ —
Лаçра трон çинчи пек ларать, сăра-эрех сĕрсе.
Ун армançи — куштан Шăрка,— тиек тилли, кĕççе пит,—
Мĕн чул саппун çыххи татман кунта вăл сĕм-çĕрле...
Ют арăмсемшĕн, инкесемшĕн ун чĕлхи пит çепĕç —
Пĕр чĕптĕм çăнăхшăн çынна сутать вăл сĕмсĕрле,
Пăхăнмасан — тиек айне тĕркелĕ...

Ак халь те вăл — пĕр «путеке» пăвса çĕкленĕ кашкăр—
Мĕлке пек шурĕ йăвине: хуçи кĕтет «парне».
Çулти Аттай вăйран кайсан, Шăрка ирччен хăй ашкăнĕ...
Мĕн тумĕ кайăк, чĕпписем карсассăн çаварне?!—
Шăлне çыртать, тӳсет хĕрарăм... Выçлăх, арман чулĕн,
Чысран-ятран тăвать-çке хывăх, тултарать миххе...
Тумхахлă, пылчăклă та пăрлă намăс çулĕ!..
«Çак тертлĕ пурнăç пырĕ-ши, çынсем, ĕмĕрлĕхе?!»—
Тесе ан мăкăртат, ан кăшкăр...

Çăвар уççассăн — çийĕнчех сана шантарĕ тăллĕ.
Сăнчăрсемпе чăнкăртатса эс тĕнкĕн Çĕпĕре.
Унта (чĕрех юлас пулсан!) ăнланăн: пулĕ тăвăл!
Тинех эс тупăн хăв çулна — вăл пулĕ ĕмĕре...
Нихçан та чăнлăх çутине çын çутайман асапсăр,
Кĕрешĕве çĕкленеймен ăс, чун пиçĕхиччен.
Чăваш та, ăстăн çӳпçине уçма хевте пухассăн,
Тин илтнĕ вăхăт чĕнĕвне... Анчах унччен
Вăл пулнă суккăр, чухăн, тăлăх.

Анчах унччен... тискер Аттайăн кивĕ çилармане
Хăратнă ял сыннисене каçхи ăнланайми шăв-шавсемпе.
Урттем ачи çĕр айĕнчен асаплăн çухăрман-и?
Пырса кĕмен-и ют унта тарланă утсемпе?
Çарапакка «пирĕштисем» каç-каç хӳхленĕ имĕш,
Çунат çинче аташнă-мĕн такам хăрăлтатса...
Те чăн ку, те суя — мĕн илтнине йăлтах асилмĕн.
...Пĕр пăлхавра çав çилармань каять тĕпрен çунса.
Аттайпала Шăркан шăмми те юлайман-мĕн...

Ун хыççăн уйкилсем (Уйкил — çав ялăн ячĕ)
Тырра аларманьпе çех авăртнă, вăрçса та тарăхса.
Çав аллă çухрăмри Варлам хуçа патне каять-и
Хресчен ик-виçĕ пăтавкка тырришĕн, тар тăкса?
Пĕрин пур килĕ, тепĕрин — сулмаклă тăн-тăн кисĕп.
Вĕсемпеле те тинкĕлелĕхех пулать тӳме.
Çапах та ултура юррисĕр-шăкăрккисĕр
Хресчен пурнайĕ-ши? — хуплу, кулачă пĕçерме
Шур çăнăх кирлĕ пулаканччĕ...

Çĕн çилармань лартас тесен те — çук укçи-нухрачĕ
Уйкил хресченĕсен енчĕксенче: пырать «ерман вăрçи».
Патша пулăшасса кĕтекенсен те ушкăнĕ сайралчĕ.
«Долой самодержавие!» — вулать каç-каç ял тимĕрçи,
Чухăнсене лаç хӳтлĕхне пухса. Учителе ак тытса кайрĕç.
Упа тустарнă кăткă тĕмилле тавралăх лăпкă мар.
Ялти «хвилосăх», библи вулакан тияккăн Каврăç,
Сарать «тĕнче пĕтет!» текен усал хыпар.
Ăна «Çеттуй Кавруççи» ят параççĕ...

Пасарсенче, хупахсенче, йӳн хак хурса, сĕнеççĕ
Медаль, чыс, турăш, ĕненӳ — йăлт сутăнать-çке халь.
— Арканчĕ Руç,— йĕрет пĕри.— Пророкĕсем суеçĕ...
Хресчен ун еннелле сурать: — Ан чакăртат, çухал!
— Эппин, чăнах тĕнче пĕтет?!

— Пĕтин!
— Ĕçер-ха.
— Намăс!..
— Ĕçер те — юрлама пуçлар хресчен шăпи çинчен...
— Çук! Самана кун пек тăрсан, тек шăппăн пурăнаймăн!
Ыр хыпарсем те çиткелеççĕ-ха... енчен-енчен...
— Мĕнле çынсем хупахсенче сӳнеççĕ!

Анчах та—«Коммунизм мĕлки шăвать Европа тăрăх!..»
Цех шавĕнче, тĕрмесенче те пыйтлă окопра
Çĕнни тĕвĕленет, ӳсет... «Кĕрешĕве кар тăрăр!»—
В. Ленин халăха чĕнет çурхах пек хаçатра.
— Эй, çĕтĕк-çорăк! — кăшкăрса кĕрет «кахвать
тутарĕ»,—
Çынсем каларăш, большевик,— Уйкил хутлăхĕнчен.
«Маття» парсассăн, хресчене вăл йĕп, тӳме тыттарĕ,
Листовкăпа чĕрке-чĕрке... Хăй вăрттăн, хăлхинчен,
Систерĕ: «Çывхарать, юлташăм, тăвăл!»

— Эй, çĕнелӳ пуçланнине сиссе, чăваш, çуп алă!—
Вĕçет çунатлă пĕлтерӳ мăн Атăл тăрăхне:
«Çапса антарнă патшана!!!» Ытти — йăлтах-çке паллă.
Апла, туссем, сăвăлар мар çĕршыв историне.
...Уйкилсене çунат парать кĕрлевлĕ революци —
Кĕтме пуçлать хресчен ырра вăраннă ăстăнпа.
Чăваш ачи букварь вулать: «Мы — не ра-пы. Мы—
лю-ти».
Çырать истори çĕнĕ эпосне час-час вĕри юнпа.
Республика вутра та... шанчăклă малашлăх.

...Иртсе каяççĕ юнлă тăвăлсем. Сухаланать «нуша
йăранĕ».
Тĕвĕленет, тĕрекленет колхоз çĕр киллĕ Уйкилте.
Ик-виç çултан, кĕлет-пӳлмесенче тырри кăшт пулнăран-и,
«Лартасчĕ çилармань» чĕнӳ чĕлĕмсене чĕртет.

— Лартасчĕ... Вăй ситет. Анчах платникĕсем ăстайсăр.
Ютран чĕнес — тӳлес пулать чылай нухрат-укҫа...
— Пур имĕш Тӳрпӳлек енче курпун çын, ăста Тайăр.
Тен, килĕ...
— Мĕн калан, правленири хуҫа?
— Чĕнсе пăхсан, юрамĕ-и?
Эрне иртет. Лав тавраăнать. Анчах вăл темшĕн пушă...
Лавҫи, ĕшеннĕскер, кулать утне тăварнă май:
— Ĕҫ майлашать. Ăсти паян хăйрать-ха пуртă...
Çуран пыратăп, тет. Виҫ талăкран ситет — утас пулать самай.
...Виҫ талăкран курпун мучи укăлчана шаккарĕ.
Мăкăртата-мăкăртата юсарĕ те кивелнĕ алăка—
Яла кĕмесĕрех сăрт еннелле васкарĕ...
Каларĕ председатель:
— Чупăр. Çăкăр кушĕ...

Сăрт тӳпине ситсессĕн, Тайăр кăшт, пĕр ăстрăм, канчĕ
Йĕсленĕ чĕлĕмне тивертнĕ хыççăн хĕмлĕ ăввипе.
Куккуклă алшăлли çинчи шур кулачча тутанчĕ те
Каларĕ:— Ан тăкăр тăварне... Тутăхтарать пуртта...
Тĕтре... йĕпе...
Унтан, тăрса: — Çич кĕреҫе, пĕр кисĕп,—лăпкăн хушрĕ.
— Çĕн вырăна лартас... Ача шăмми çинче
Йӳçенкĕ пулĕ çăнăхĕ... Кулаччăр кăшт çех куштăр —
Арман айне ăна хурар. Елĕктерех Чăваш çĕршывĕнче
Ача лартса хăвараканччĕ...

— Кисĕппӳпе тĕнкке-ха ман тавра, тăванăм...
Мучи, çерем çине выртса, итлерĕ те çĕре:
— Чул пур... Çĕр анас çук... Арман лартма аван пек,—
Текелесе кăшт кулчĕ:
— Уçăр-ха сар пичкĕре...
Пĕр алтăрне,— йăли çапла,— Çĕр-амăшне ĕçтерчĕ.
Хăй ӳпĕнтерчĕ теприне:— Ĕҫ пытăрччĕ ăнса!

Çĕр хуçисен чунне çак самантра ан ертĕр эрлĕк —
Пĕр алтăр кашнине хăй пачĕ вăл ăсса,
Вара — сăпайлăн какăрчĕ, тăраннăн...

— Халь пичкĕре валак умне антарăр — пултăр хӳтĕ.
Унтан кĕреçепе йĕр турĕ.
— Вырăн пултăр çак...
— Эсир, çыртма йĕмсем, мучи валли ăсталăр ăшă хӳшĕ.
Ик-виç кашма та типĕ утă хатĕрлĕр каça...
Ыран ниме тăвар — пура тени çĕклентĕр хăвăрт.
Çанталăкĕ аван тăрать. Тăрне лартасчĕ çумăрччен.
Тĕнче улт енлине, тăванăмсем, пĕлетĕр хăвăр—
Пура та пултăр ултă йӳнлĕ... Хамăн ĕмĕрте
Эп тĕнчене тăвăрлатман, илтсен те хӳхĕ...

— Эй, нимене!! — йыхрав яла шуçăмпалах вăратрĕ.
Сăрт тӳпине кĕшĕлтетсе хăпарчĕç уйкилсем.
Кăмăлĕсем ял çыннисен — çанталăкне кура-тăр:
Вĕсем кун пек хаваслă пулнă пуль, тен, туй килсен...
Пĕренесем, йĕсрен шăратнă пек, туратсăр, тӳрĕ.
Хуппи шуратăнать аван — чутла та ырала.
Эртелпеле ĕç тăвакан этем епле вăл йӳрĕк! —
Пур пултарулăх ĕççыннин! Кунçулĕ ырралла
Кайни ак çĕннине çуратрĕ.

Вăл ăмăрту. Аста ĕçлевçĕн пур чунра ыр туйăм:
Ĕçе вăл тĕплĕн, çынсенчен малтан тăвасчĕ, тет.
Тепри илемшĕн пуç хурать — ун «аллине» эс уйăрăн:
Вăл тунă ĕç чун-чĕрере хавхалану чĕртет.
Киревсĕрсем ахальтен мар хăш чух вутра çунтарнă
Илем вăрттăнлăхне ăнкарнă чăн-чăн ăстана.
Сĕм авалтан ун ĕçĕ тарлă, çăкăрĕ тăварлă...
Упрайăн-ши, этем, эс унсăр хăвăн ăстăнна?
Тен, сăхăмран та пулмăн уйрăм...

...Юратнă Тайăр хăй ĕçне. Пулман ун ни пуянлăх,
Ни тур лаша, ни аслă çурт... Ĕç хатĕрне илсе,

Çӳренĕ вăл «тĕнче касса». Ана пуç тайнă ялăн
Часах çĕкленнĕ çилармань. Ытарайми илем
Упранă унăн кӳлепи — пури, тăрри те йӳнĕ.
Кăра çиле юратакан çунат çаврăмĕсем вара
Хресчен чунне хускатнă, çутă шанăç кунĕ.
Чăвашăн символ пулнă çилармань... Килсессĕн йывăра,
Тĕнккенĕ унăн сулхăнне, уя вăл...

Чĕлĕмĕнчен шевле сапса, кунта ирччен те ларнă.
Çиларманьпе вăл танлаштарнă хăйĕн халăхне.
Ун эрлĕклĕ шăпи пирки пăшăрханма пуçланăн,
Пикеннĕ вăл уçса пăхма пуласлăх алăкне.
Мĕскер вăл илтнĕ-ши унта? Мĕскер унта вăл курнă?
Илемлĕ ĕмĕт тĕнчине? Тен, паянхи куна...
Тен, урăх юрă-кĕвĕсем... Унта, тен, тăвăл урнă,
Арман çунаттине ватса?.. Тен, лăпкă çил çынна,
Хăй ыйхине чĕнсе, питрен çуланă...

Каç-каç, çунат вĕçĕсенчи çăлтăрсене сăнанăн,
Тĕнче вĕçсĕрлĕхне путса, пат татăлнă çын шухăшĕ
час-час...
Вăл тĕлĕннĕ темрен, темрен хăранă та... Тискер сăнарлă,
Ялан улшăнакан инçет чăвашăн хупă пулнă-çке пачах.
Çавна курах, тен, шĕвĕр тăрăллă пура çӳле çĕкленнĕ:
Вĕçеймесен те çунатсем ун пулнă ĕмĕртен.
Çавна курах чăн-чăн арман пури улт йӳнлĕ, енлĕ...
Ват Тайăр тунă армансем чи ырă ĕмĕте
Хăйсен кӳлепинче ялан упранă...

Анчах çĕртен те уйрăлман нихçан асамăç Тайăр —
Нимрен хакли ăсташăн пулнă çăкăр, çын, илем.
Сĕрĕмлеймен нухрат янравĕ, йăпăлти мухтавĕ
Ун тăрă ăстăнне: ăста, мăнаçлансан,— вилет!..
Хресченпеле пĕрле вăл çинĕ, сăрине те ĕçнĕ,
Йăваннă пĕр йăран çине, нуша мăйран пăвсан.

Ан пĕттĕр çĕр çинче пултаруçсемшĕн ĕç çех!
Арман тени вăл авăрĕ, тырри ăнса пулсан...
Пуртта та мăкатман хальччен ыр çыннăн тавĕ.

...Хĕрсе пырать ĕç нимере. Турпас шăршиллĕ шӳчĕ.
Çĕкленнĕçем илемленет улт йӳнлĕ сар пура.
Пĕренесем хăпартнă чух кирлех-çке килĕшӳ те —
Апла-тăк, тăратар çума вăй паракан юрра.

Хивре явнă вĕренне,
И-й-йе-ех!
Йăпăр-япăр пĕрене,
И-й-йе-ех!
Айтăр çĕклер çӳлелле,
И-й-йе-ех!
Харăс — юрă кĕввилле,
И-й-йе-ех!
Çак пĕрене йывăр-и?,
И-й-йе-ех!
Çутă тĕнче тăвăр-и?
И-й-йе-ех!
Пура лартма вырăн пур...
И-й-йе-ех!
Вилсен, выртма шăтăк пур...
Эх!

— Эй, сӳттеней! Чакак хӳри — чĕлхӳ! Çапла-и
Юрлаççĕ халь, çĕн пурнăç пуçлансан?!
Пĕл: уйкилсем ялан юрланă пит те лайăх—
Никам та шыв сыпса ларман, екки куссан.
Пăрах-ха кивĕ юрруна кив пĕвене — кăшт шӳтĕр!..

— Тăварлатать юрра мунчасăр тухас тарĕ,—
Тет лĕкĕрти Лĕркке мучи. Хăй çийĕнчех хастаррăн
Пуçлать çĕн юрă.

— Тӳсмен кӗчӗ эртеле.
— Ав, епле?!
— Тӳсмен пӑтӑ çикелет!
— Ав, епле?
— Тӳсмен хывнӑ ашшӗне...
— Ав, епле!
— Кутӑн кӳлнӗ лашине...
— Ав, епле?!
— Кӳлсе курман ӗмӗрне.
— Ав, епле?
— Чӳлӗк тунӑ чӗлпӗрне...
— Ав, епле?!
— Тӑхӑнтарнӑ хӑмӑтне...
— Ав, епле?
— Эртел лаши хӳрине...
— Ав, епле?!
— Лаши тапнӑ Тӳсмене!
— Ав, епле?!
— Тин ӑс кӗнӗ Тӳсмене...
— Ав, епле!

Тӳсмен кулать... Чӑнах, мӗнле тӑван йыша çилленӗн?—
Ӑна «ие» темест никам. Вӑл — çын, колхоз çынни!
Вӑл вӑйлӑ ушкӑнпа чухне. Ун кӑмӑлӗ çӗкленнӗ! —
Ӑна çуратнӑ çӗнӗрен ыр амӑш пек çӗнни.
Аттайпала Шӑрка йӑхне манса кайман вӑл пурпӗр.
Нихçан та манмӗ! — чӗринче пирченес çук суран...
Çурхи шывсем пӑр ватнӑ пек, ӑна колхозлӑ пурнӑç
Хӑтарчӗ чухӑнлӑх тесе ят панӑ тыткӑнран.
Халь çавӑнпа Тӳсмен ӗçлет, виç çын ӗçленӗн!

Курпун ӑста пура тавра утса çӳрет мӑнаçлӑн.
Картать, çырать, шитпе виçсе. Унтан тытать сава.
Чӑнах, асамӑç вӑл кунта, чӑнах, кунта вӑл аслӑ —
Вӑл хушнине кашни итлет, вӑл хушнӑ пек тӑвать.

Пурасене тӳрех мăкланă Тайăр хăть хăçан та —
Пĕрре те йăнăшса курман! Проекчĕ ун асра:
Пичет те пуснă, чертежсем те — пурте, пурте янтă!
Шикленмĕ тушь пăсăласран е хучĕ «çăтасран»...
«Инстанцийĕ» те ун пĕрре, пĕрре çех «влаçĕ»...

Аттайпала Шăркашăн мар — хăй пек ĕçчен çынсемшĕн
Тăвать-çке Тайăр арманне! Çавна туйса-и, тен,
Хавхаланса ĕçлет ăста. Тата васкать вăл тем-тĕр.
Хаш сывласа, калать хăш чух: «Эх, ĕмĕрĕм иртет...
Тата ик-виçĕ çилармань куç курнă чух лартасчĕ.
Ак пуртă хыççăн наструкпа пуçларăм якатма.
Туйми пулатăп йывăçа... Хевте хĕлхемĕ тарчĕ...
Эх, вăхăтсăр пуçларĕ манăн пурттăм мăкалма!
Касас кĕрешĕм те çинçе-шим...»

...Çывхарчĕ кĕр. Кĕскелчĕ кун. Каç-каç шуралчĕ курăк.
Пилеш хунарĕсен çути çул пачĕ сив çиле.
Картан-картан вĕçсе иртет — тăрна-и, кайăк хур-и—
Çунат хускатнă пĕлĕтрен шур мамăк вĕçкелет.
Колхозлă ял çаплах ĕçре: юр лариччен мĕнле те
Хута ярасшăн армана Уйкил хресченĕсем.
Кăркка пĕсехи пек тулли пӳлми тата кĕлечĕ.
Пит кирлĕ çăнăхĕ, кĕрпи: туя, ав, чĕнессе
Кĕтеççĕ ват çынсем, ĕнеркелеççĕ юрă.

Вăштăр-вăштăр çил вĕрет,
Юрлă-пăрлă çил вĕрет,
Ай, вĕрет.
Сакăр çунат çаврăнать,
Вунă çунат çаврăнать,
Ай, çаврăнать.
Уйкил çынни мĕн тет-ши,
Уйкил çынни мĕн тет-ши,
Ай, мĕн тет-ши?

Шурă çăнăх шур юр мар,
Шурă çăнăх шур юр мар,
Ай, шур юр мар.
Нихçан çуман тӳперен,
Нихçан çуман тӳперен,
Ай, тӳперен...
Уйкил çынни мĕн тет-ши,
Уйкил çынни мĕн тет-ши,
Ай, мĕн тет-ши?

Арман чулĕ пысăкăш,
Арман чулĕ пысăкăш,
Ай, пысăкăш
Юмахра çех кулачсем,
Юмахра çех кулачсем,
Ай, кулачсем...
Уйкил çынни мĕн тет-ши,
Уйкил çынни мĕн тет-ши,
Ай, мĕн тет-ши?

Чĕрне хури пĕчĕкĕш,
Чĕрне хури пĕчĕкĕш,
Ай пĕчĕкĕш
Ывăç çинчи тыр пĕрчи,
Ывăç çинчи тыр пĕрчи,
Ай, тыр пĕрчи...
Уйкил çынни мĕн тет-ши,
Уйкил çынни мĕн тет-ши,
Ай, мĕн тет-ши?

Пиçет çунат валли хăма пăс ăшĕнче виç талăк
Унтан типет вăл мунчарах тата пĕр виç эрне.
Вара пулать çăп-çăмăл, çирĕп — пур тăвăла чăтмалăх...
Мучи пит шеп пĕлет майне, туять вăл виçене!
Ак ултура, тĕпек, йĕке — ытти те пулĕ хатĕр:

Лаç ăшĕнче пĕр вĕçĕмсĕр вĕçет, кусать турпас.
...Иртет пĕр уйăх ытларах. Пур ялйыша пухать те
Мучи çунат вĕçĕпеле çил кассине тупать!
Çак саманта кĕтмен-и халăх?!

Хускалчĕç çăмăл çунатсем! Ак çаврăнма пуçларĕç!
Таçта — шалта — шăлтăртатса юрларĕ шĕтĕрнек.
Кăшкăрашаççĕ савăннă сынсем:
— Ха, кайрĕ! Кайрĕ!
Каларĕ Тайăр:
— Сылтăма кăшт çаврăр-ха тăрне.
Унтан вăл кĕчĕ те шала — урлуççие куçарчĕ.
Чул тытăнчĕ кĕмсĕртетме, шăлтăртатать алтан.
Мучи пĕрме вулашкине шăлтăрмапа уçать те —
Ташла-ташла юхать тырри сар пĕрмерен, шалтан.
Ак-ак хĕвел пайăркипе çуталĕ ларĕ!

Часах валак хăвăлĕнчен юхма пуçларĕ çăнăх! —
Нимрен те хаклă çак самант хресченшĕн, кам пĕлмест!—
Епле вăл ăшă та çемçе... Унран пулать-çке çăкăр!!
Мучи ун юхăмĕ çинчен темччен куçне илмест.

Кăштах шăлтăрмана пăрать: шултра-ха, пултăр вĕтĕ.
Ывçи çинчи шур çăнăха тирпейлĕн активет,
Сăтăркалать пӳрнисемпе... Пĕрчи лекмест пек ĕнтĕ.
Итленĕ майăн арманта çуралакан кĕвве
Илемлĕн çуталма пуçлать мучийĕн сăнĕ.

Вара тинех ыттисене арман ăшне чĕнет те,
Пусма çине ларса, сăнать çынсен савăнăçне...
Хальччен ялан вăл кăмăлĕ çемçелнине çĕнетчĕ,
Халь... çăнăхланнă çаннипе шăлса илет куçне.
Унтан, тăрса, чĕнет:
— Çĕр çул çак çилармань ĕçлетĕр.
Илтетĕр-и, епле хаваслăн вăл кĕрлет-сĕрлет!..

...Çапла пĕрремĕш пилĕкçуллăх стройкине вĕçлерĕ
Çав кун мучи колхоз йышĕпеле пĕрле.
Çакна асра тытмастпăр пур чухне те...

...Ялта çăхан кранклатиччен çула та ухрĕ Тайăр,
Хура тăла кутамккине курпун çине хурса.
Çĕн çилармань тĕлне утса çитсен, пуçне кăшт тайрĕ.
Вара... тĕнккерĕ малалла, çул пылчăкне çăрса.
Çав самантра çунатсене кĕрхи сив çил хускатрĕ,
Ал сĕлтнĕ пек, малтан вĕсем сулланчĕç те вăрах,
Хуллен пуçларĕç çаврăнма... Çапла Уйкил ăсатрĕ
Хисеплĕ, ăслă ăстана... Арман хуçи вара,
Тӳсмен, лаç çумнелле, вăй пĕтнĕн, тайăлчĕ...

...Тӳсмен мучи, турашăл пек сап-сар сухаллă ватă,—
Сăмахĕ тăрăх, çĕр çула çитсе пырать вăл халь,—
Иртни-курнисене манман, пит лайăх астăвать-ха,
Час-час, туя тытса, сăрта мекĕрленсе ухать.
Çилармане ватма çав кун Тӳсмен мучи хăй чарнă.
«Эппин, мана та йĕтрӳпе çапса вĕлер! — тесе
Вăл кăшкăрнă ун чух, Дон-Кихотла туйипеле хăмсарнăн.
— Мĕскер вăл, йывăç? Вăл чĕлхесĕр — чĕнеймест, тӳсет.
Ман пурнăçа, айван çын, тĕп тăватăн!..»

Ларать çунатсăр çилармань—ларать, поэтăмăр каларĕш,
Уçăхалла вĕçсе каяс ракета евĕр курăнса.
Çынсем, ун ĕмĕрĕ-шăпи çинчен кăшт шухăшлар-ха:
Вăл мĕн кăна курман-тӳсмен, çур ĕмĕр пурăнса!
Мĕнле çилсем кăна ун çунатне çаврăнтарман-тăр,
Мĕн тĕрлĕ тăвăл лăскаман ăна, хуçас тесе!
Канмасăр авăртнă тырра арман, çĕр çыннине тăрантнă,
Халăхпала пĕрле туса нихçан пĕтми ĕçе.
Çапах ялан тулли пулман ун ларĕ...

Мăян та авăртнă чулсем, çĕршыв вута кĕрсессĕн.

Е пăркăчланă çунатсем, шултăркаса-çĕрсе,
Çил ачипе ыталашса ӳленĕ... Ăшă çăнăхсăр, кĕрпесĕр
Ырçа пуçланă пăнтăхма. Пит йывăра килсен,
Шур пĕрчĕ юлмиччен ăна хырса-çуса тасатнă,
Пĕр ĕмкĕчлĕх пулин кив çăнăх тухасса шанса...
Пĕрме кашти е мăк çинчи вуншар çулхи тусан та
Пуçтарăннă ун чух хутаçсене, йăлт шăлăнса:
Мĕн тăвăн-ха, пепкӳ «мемме» кĕтсессĕн?!.

Тӳсмен мучи лаççа хупса тытман вара нихçан та —
Лăк тулнă тĕттĕм каçсенче ватти-вĕтти унта.
Юмах юхсан, итлекене киле чĕнеймĕн чансăр,
Хăш чух юрланă ушкăнпа е хурланса, е савăнса чунтан.
Тĕрĕссине калас пулсан, хăй евĕр академи
Кунта ăс панă хресчене, вĕрентнĕ пурнăçа.
Саманине, кунне кура хăех çуралнă «тема».
Час-час тăн кĕртнĕ пĕр-пĕрне шӳтпе-и е вăрçса...
Юмах-сăмах та шӳт ялан чăвашăн янтă.

Çунат сулхăнĕнче яш-кĕрĕмсен çуралнă вăрттăн туйăм
Сар çуллă уйăх ирĕлтернĕ майăн пыл ыйха.
Кайран... ялта кашни кĕрех пуçланнă ĕмĕт туйĕ,
Вара... çуралнă çухăрса чăваш тăсма йăха.
Пушаннă, тулнă михĕсем... Каçхи арманăн хӳтлĕхĕ
Хăш чух май панă тĕл пулма çулăмпала хĕме...
Хăй сӳннĕ. Măшăрлă чулсем юрланă хӳлтĕр-хӳлтĕр...
Шур çăнăх кĕрчĕсем анчах çутатнă тĕттĕме...
Пĕр кĕтесре чăр! чĕриклетнĕ тунсăх.

«Арман çуначĕ çаврăнсан, ялта сӳнет-и пурнăç?»—
Философла картса каланă ваттисем час-час...
Халь уйкилсен, мĕнпур енчен пăхас пулсан, пур ăнăç.
Çунатсăр тĕлĕрсе ларать кив çилармань анчах...
Астăвăр-ха, Чăвашьене çывхарнă май кураттăмăр

Сăрт тӳпинчи çӳл çилармань çунаттине таçтан.
Ах, çилармань! Çунаттине епле хитре çавратчĕ вăл!
Ăçта çав савăк сăнарсем? Хăйевĕрлĕх, ăçтан,
Мĕнле çĕнĕлĕхпе эс курăнăн?

Хăшпĕр яла пырса кĕретĕн те — йăлтах аптратăн:
Камсем пурнаççĕ-ши кунта? Тен, ку — Тмутаракань?..
Çук çилармань, валак е пусă, çук лăстăркка йăмра та,
Çук пуль кунта сар хăмаран тĕр-чĕнтĕр тăвакан,
Йăваннă укăлча юпи. Масар çинче, ав, тапăр...
Ăçта халь ăслă ăстасем? Тен, йăхĕ те юлман?..
Мĕн чухлĕ çĕнĕ çурт кунта! — вĕсем чăнах та капăр,
Анчах пĕр евĕрлĕ пурте... Кун пеккине курма
Пулать пуль çурçĕрте те, кăнтăрта та.

Эп скептик мар. Çĕнĕлĕхе ăçта та асăрхатăп.
Пӳртре шыв юрласа юхни, газ йăлкăшса çунни
Мана чунтан савăнтарать — мухтав юрри-сăвви хыватăп
Хурлантарса яман чухне çав «ӳсĕм чирĕ» текенни.
Ил телевизор, ил тумтир, машина, гарнитур та,
Тата... улт-çичĕ кĕнеке туян ăс йӳтиччен!..
Ан пултăр чĕлтĕрти укçа этемшĕн «аслă турă».
Çитмен-ши вăхăт шутлама «арканнă» чун çинчен?
Шалти культура та чылайăшин «ырхан»-тăр...

Эрех те, асăху та, харкашу... Кама çак йăлăхтармĕ!
Ыр йăласем те этика тени çитсех каймасть пире.
Ан пул ху тăвакан ĕçрен пĕчĕккĕрех, ан пул мăнтарăн,
Этем тени!
Хăш чух эс ăслă та маттур, хăш чух... киревсĕр эс...
Çĕнни асапсăр çуралмасть, тесе тахçан авал каланă.
Анчах асат ан хуçтăрччĕ вăй иличчен ăна...
...Чĕре ыратнăран çакна çыратăп эп, ăнланăр.
Тен, вăхăтсăр сăмахăм ман, тен, вăхăтлă чăнах?
Поэзи тивĕçĕ мана чăнран хăтармĕ.

...Сăрт тӳпине тăрса, тавраналла тинкеререх пăхсассăн,
Ытарайми илемлĕ панорама куç умне тухать.
Ку — çĕнелӳ сăнарĕ. Индустри утăмĕн хăй евĕр сасă —
Тракторострой çунат сарать кунта, ӳсет, пухса вăй-хал.
Епле кĕрлет пин лаша вăйлĕ техника армади.
Ăçтан унпа танлаштаран алтанăн сассине?!
Мĕнле масштаб! Ĕç анлăшне куçпа виçсе тухма та
Çăмăлах мар — çапах ĕçчен тăвать тăвассине!
Саманине кура çĕнтерӳсем те аслă.

Тухать çĕн пилĕкçуллăх нимине рабочи класс хăватлăн.
Миçе тĕрлĕ чĕлхе, миçе тĕслĕ сăн-пит, куçсем кунта!
Çĕршывăн анлă стройкинче çирĕпленет историлле
тăванлăх —
Вăл совет халăхĕ! Ăна саватăп эп чунтан.
Çак Аслă Пĕрлĕхе никам, нихçан та аркатаймĕ —
Вăй çитĕ унăн çĕршыва тĕпрен, йăлт çĕнетме.
...Пĕччен ларать сăрт тӳпинче кив çилармань. Вăл
тайлăк,
Çапах та чĕрĕ пек, пултарнă пек курма-илтме,—
Йăлтах пĕлесшĕн ăвăнать-çке ватлăх...

Курать вăл: лăпкă Атăл хĕрринче çĕкленчĕ элеватор,
Кăшт леререх — мелькомбинат. Вĕсен кӳлепинче
Хăй сăнарне шырать пулас çунатсăр ватă:
Аслашшĕ хăй сăнне çапла шырать мăнукĕнче...
Пĕлетĕр пит аван: йăхне тăсасшăн-çке такам та —
Чĕрчун та, курăк та... Çапла çак çут тĕнчен йĕрки.
Ан тив, кив çилармань сăрт тӳпинче ват çын пек
кантăр,
Çунатлă яшлăхне аса илсе. Ун несĕлĕ пирки
Шухăшласа, пуçне хăй, халăх, ваттăр...

Ан кĕттĕр вăл «çӳлти инстанцирен» постановлени:
Кашни арман пирки ирттерĕн-и пуху е съезд.

Çак çиларманӗн пурине истори тапхӑрӗ çӗкленӗ —
Мӗн-ма ӑна, сӗмсӗрленсе, ишес, ватас, сӳтес?!
Иртнипеле хальхи хушши ахрат çырми ан пултӑр —
Ун пек пулас пулсан, тымарсӑр пулӗ пуласси.
Тӳсмен çӗршывӗнче, ялта, пӗр çилармань хӑть юлтӑр:
Е йывӑр-и унран кунçул музейӗ тӑвасси?..
Çапла сӑрт тӳпинче эп ӗмӗтлентӗм.
Çав самантра каска çинчен темле мӗлке хускалчӗ.
Таçта эп курнӑ ку сӑна, анчах — ӑçта, хӑçан?
Çук, паллаймарӑм, тӗттӗмччӗ ытла та сулхӑн каçӗ.
Калаçрӗ вӑл юрланӑ пек, пырса тӑрса хыçа:

— Эпир те тутлӑ ӗнеӈ пылне
Йӳççе хӑнӑхиччен час-час тутаннӑ.
Эпир те тӗлӗксем сенкер чухне
Инçетелле вӗçме çунат туптанӑ.
Тертленнӗ пӗчӗк йӑнӑш тунипех.
Нимрен ытла çын куллинчен хӑранӑ.
Кунçул юханшывне чун çутипе
Пиртен кашни тӑрӑлтарма пултарнӑ.
Хавал пуртан хаваслӑ юрӑсем
Уявсенче хавхаланса юрлаттӑмӑр...
Ӗненнӗ: тӑнлава шур юр витсен те,
Упранӗ çамрӑклӑх юратӑвӗ...
Çӗршыв чӗнсен, çапӑçура — вилме,
Ӗçре — çунма эпир пулман-и хатӗр?
Çӗн ӗмӗр чӗлпӗрне алла илме
Пикеннӗ çын иккӗленме пӑхать-и?!
Çунатлӑ, вут çилхеллӗ урхамах
Телей çӗршывӗ шырама вӗçтернӗн,
Тӑп чарӑнса, пуçларӗ тулхӑрма —
Юланутçи йӗнерӗнчен вӗçерӗнчӗ...
Кӗрешӳре туптаннӑ хурçӑ хӗç
Лӑпкӑлӑхра йӑлт тутӑхӗ, мӑкалӗ,
...Нумайӑшне пире сыватрӗ ӗç,
Нумайӑшин — чакма пуçларӗ халӗ.

...Халь наркăмăш пек эрĕм йӳçекне,
Кичемлĕх пăрăçне хушса, ĕçетпĕр.
Хевте илме каяймăн кивçене —
Ак тĕлĕкре те çĕрелле вĕçетпĕр...
Эсир хастаррăн кайăр малалла —
Ан пултăр çулăр кукăр, сăртăр сулчă:
Пиртен çӳле-çке сирĕн ухмалла,—
Эпир...
— Вăл аллине салхуллăн сулчĕ.

...Çывхарчĕ кĕр. Кĕскелчĕ кун. Каç-каç шуралчĕ курăк.
Пилеш хунарĕсен çути çул пачĕ сив çиле.
Картан-картан вĕçсе иртет — тăрна-и, кайăк хур-и—
Çунат хускатнă пĕлĕтрен шур мамăк вĕçкелет.
Уйкил çынни, сивве сиссе, паян ирех вут хутнă.
Çĕн тырă çăкăрĕ пиçет пулас кăмакара —
Мăрье енчен шăвăнакан пăс ырă шăршлă, тутлă...
Мĕнех вара, çак çĕнелӳ саманине кура
Арманĕ те хресченĕн пулĕ урăх.

Арманĕ çех-и? Символ та чăвашăн пулĕ çĕнĕ —
Хĕрӳ ĕçре улшăнакан çĕршыв сăнарĕнче
Палăракан илем, пире хавхалантарнăн сĕнĕ
Çĕн çунатсем, çĕн ĕненӳ, çут шуçăмла инçет...
Çапах та хăйĕн телейне çын çĕр çинче çех шырĕ,
Хуçа пек упрама вĕренĕ ун пуянлăхне.
Часах ăнланĕ вăл çакна: этем тупаймĕ ырлăх
Çăкăрĕпе шайлаштармасăр ăстăн «апатне»...
Çак мар-и пирĕн ылтăн Кодекс чĕнĕвĕ!

Сĕт кăпăклĕ кĕрхи тӳпе. Анчах унта сасартăк
Кĕрлерĕ мар-и аслати? — вĕçет Уйкил енне
Вăр-вар çунатлă вертолет. Епле хăватлă сасă!
Хавхаланатăп эп, курса тӳпе çилармanне.
Анса лармасть-ши саманта кив çилармань çумне вăл?

Анмасть — вĕçет инçетелле пĕр палăртнă курспа.
Юлать аслашшĕ çĕр çинче... Кӳлепипе ун евĕр
Мăнукĕ, курăр! Тӳпере вăл вĕçнине курсан,
Асли епле çунат ан сартăр!

Анчах — çунатсăр çилармань... Çунатсăр та... илемлĕ:
Уçлăхалла вĕçсе каяс ракета е хирте
Тыр выракан агрегатсем ун сăнарне илмен-и?!
Эппин, вăл пурнĕ çĕн сăнпа çĕнелнĕ ĕмĕрте.
Ах, вăхăт, вăхăт! Ăслă та ырма пĕлми ăста эс
Çĕр чăмăрне çĕнетекен чи аслă нимере...
...Çакна хресчен ăстăнĕпе аван ăнланнă Тайăр!
Ун йăхĕ Çĕнĕ Пĕрлĕх ятлă аслă çемьере
Тымарĕнчен хăрмасăр чечеклентĕр.

Никёс

Тӳпе сӗрекинчи хӗвел,
Çунатлӑ пайӑрка вӗçӗсемпе йӑлтӑртатса илсе,
Пытанчӗ çӗр хыçне.
Тӗнче вучахӗ сӳннӗ май хӗлхем сапса,
Сӑрт-ту пек курнакан шур пӗлӗтсен капланчӑкӗ,
Илемлӗн хӗрелсе,
Кун çутине хупларӗ.
Хӳтевсӗр уçлӑх вӗллинчен
Ӗнтӗркесе вӗçсе тухать сӗрлевсӗр хурт-сӑпса
Пӗветнӗçем сив анӑç сулхӑнӗ тавралӑха.
Ларатӑп ӑшӑ чунлӑ вут умне.
Çемçетнӗн кӑмӑла
Ӑнланайми чӗнӳллӗ çутӑ тунсӑх,
Ӗнерчӗ шухӑш хӗлӗхӗсене
Ас çӳпçинчи
Сӗм авалхи асаилӳ сас-чӗвӗсен вӑранавӗ.
Пуçларӑм ӑнкарма шыв чӗлхине,
Çил сассине...
Хальччен ӑс сиснӗ тупсӑм
Вӑрттӑнлӑхне кӑвайт çути пек уçрӗ.
Йӑпатмӑш ӗнтӗк ӑшшӑн сывлакан çӗре
Юратрӗ пепкелле,
Кӑкри çумне ачашшӑн йӑпшӑнса...
Кӑвак инçетӗн вӗçсӗр таппинчен
Юхса çывхарчӗ юрӑ:
«Чӑштӑр-чӑштӑр хӑмӑш, кӳтнӗ кӳкӗрчен...
Мӗншӗн, мӗншӗн эсӗ кимӗре пӗччен?
Хум ӑшне путарнӑ кӗсменӳ вӗçне —

Чарăннă вăл вирлĕн хĕм сапса вĕçме.

Ах, кĕркунне,
Мĕншĕн сивĕтет-ши хĕр чунне?!

Пĕлĕтсем шăваççĕ кӳлĕ тĕпĕнче.
Çулçăсем çыраççĕ кимĕ сăпкинче...
Те сиресшĕн эсĕ тунсăх тĕтрине,
Те аса илетĕн çут ĕмĕтрине?

Ах, кĕркунне,
Мĕншĕн сивĕтет-ши хĕр чунне?

Сивĕ çулăм хыпнă лăпкă улăха,
Самантра вăл путĕ канăççăр ыйха...
Çуркунне тĕл пулнă илемпи-пике
Çакăнта чăнах та килмĕ-шим текех?

Ах, кĕркунне,
Мĕншĕн сивĕтет-ши хĕр чунне...

Хупăрларĕ ĕнтрĕк сулхăнĕ кимме.
Вĕлтĕр-вĕлтĕр çулçă вĕçрĕ тĕттĕме.
...Çывăхрах янрарĕ хĕр-пике юрри —
Хĕм сапса çухалчĕ ик кĕсмен йĕрри...

Ах, кĕркунне!
Çăлтăрсем пытанчĕç хум айне...»

Ката енчи кĕрен шевле,
Кив элемле шупкаланса,
Сӳнме пуçларĕ майĕпен.
Хĕмленчĕ сăрт çинчи чăл-чăл кăвак кăлкан.
Çуталчĕç йывăç тăррисен хушпăвĕсем кăштах.
Йăсăрланса вĕçет кăвак тĕтре
Çут тĕкĕр-куçлă йăлăм çиĕпе.
Шăратнă тимĕр евĕр курăнать
Каç шуçăмĕ хĕретнĕ Атăл шывĕ.

Нӳрелнĕ уçă сывлăш та
Юхать пек тĕпсĕр вĕркĕчрен Çĕр ӳпкине.
...Нихçанхинчен илемлĕрех те тăванрах
Салху сăн çапнă Атăл,
Ĕнтрĕк пуçлансассăн.
Хумсен чӳхенĕвĕ,
Кĕсмен çунат çупни е моторсен кĕвви,
Пăраххутсем чĕнӳллĕн кăшкăртни те темшĕн
Чуна хумхантарать ытти чухнехинчен çепĕççĕнрех—
Çут тĕнчепе,
Ĕмĕрсемпе,
Йăх пуçĕсен мĕлкисемпе,
Хăйпе
Ним пытармасăр,
Куçа-куçăн
Канаш тăвас самант çывхарчĕ пуль этемшĕн...

Кив юрату,
Ĕшеннĕ чĕрене пăчăртаса илсе,
Хурлантарса ярса,
Кăвайт ăрши пек ирĕлет —
Йӳç тĕтĕмĕ касса кĕрет куçа,
Кăварсăр кĕлĕ аллăмра, шăнса, вилет...
Кив юратушăн эпĕ халь элчелĕ çитнĕ,
Сивĕ юнлă ватă,
Çĕннишĕн — сăпкари хĕвел-пепке пекех...
Ытарайми çитес ирсем илсе килессине
Çĕн ĕмĕтпе,
Çĕн туйăмпа саватăп.
Ырри ăçта та çĕнессе шанатăп-ĕненетĕп
Яш чухнехи пекех.
Кăвак лĕпкеллĕ лĕп хумсем умне
Пуçа пĕкетĕп те
Сăпайлăн —
Арçынла,

Хамран хам вăтанса ĕсĕклесе,—
Темпе сывпуллашатăп
Е... демонла ахăлтатса кулатăп,
Шур хăвасен йĕс çулçине çӳçентерсе.
Лăпланнă май алла кăвар илетĕп те
Сăнатăп вут çуратнă илеме.
— Çут тĕнчере пире кил панă Çĕр,
Этемлĕхĕн сăпки,
Сан юрруна пуçлатăп итлеме.

«Аннем чĕри тапать ман кăкăрта —
Ачаш, йăваш вăл, вăйлă, вăйсăр та...
Эп саврăм унпала чĕрĕлĕхе —
Мухтав сана, анне, ĕмĕрлĕхе.

Атте чĕри тапать ман кăкăрта —
Вăл харсăр хир вăкри те, кăйкăр та.
Вĕрентрĕ çав мана тӳрĕлĕхе —
Мухтав сана, атте, ĕмĕрлĕхе.

Туссен чĕри тапать ман кăкăрта —
Вăл нихăçан сӳнми шĕл-кăвартан.
Ун ăшшинче упратăп пĕрлĕхе —
Мухтав сире, туссем, ĕмĕрлĕхе.

Савни чĕри тапать ман кăкăрта,
Чуна чĕм кĕртекен хевти пуртан
Вăл чĕртрĕ туйăмри илемлĕхе —
Мухтав сана, савни, ĕмĕрлĕхе.

Çĕршыв чĕри тапать ман кăкăрта —
Мĕльюн чĕре, юнташлă йыш пуртан,
Упрать ытарайми ирĕклĕхе —
Мухтав сана, Çĕршыв, ĕмĕрлĕхе.

Пур сивĕнми чĕре ман кăкăрта:

Вăл — халăхăн, хăрми тĕп тымартан
Вăй-хал парать вăл вилĕмсĕрлĕхе...
Тав, халăхăм, сана ĕмĕрлĕхе».

Çĕр кăкринчен çавраçилле вĕçсе тухса,
Кăвак хуппи пулса,
Васкарĕ тĕпсĕр тӳпене çĕн вăхăт хывнă юрă.
— Эй, Тайăр,
Киммӳне чарсам! —
Сасартăк илтĕнет çыран енчен.
— Çак вырăна тымар ярсан та юрĕ!..

Илтсессĕн те ăста мучи ятне,
Тăна эп кĕрейместĕп çийĕнчех:
Çаклантăм пулĕ,
Çĕкĕ пулă евĕр,
Ытарайми илемлĕ юрă тетелне...
Тӳпе сăнне шывра курни те,
Хăй çутисен пуххи те,
Кăвайт ялавĕсен вăр-вар вăййи те
Шалт тĕлĕннĕ этемшĕн
Чăн евĕр мар — асамлăх е юмах.
Тĕнче тăрăлăхне чӳхентермерĕм-ши
Çак самантра эп ăнсăртран?
Çĕр-кимĕпе ишместĕп-ши
Этем уçас çул-йĕршĕн çутнă
Вĕçсĕр-хĕрсĕр,
Çăлтăр-бакенлă океанра?
Тен, çав Çĕр-киммĕн сулăмлă кĕсменĕсем,
Сив хумсене сирсе,
Лăчăртатаççĕ манăн алăра?..
Мĕн чухлĕ çутă тĕнчере!
Хăй çутисем,
Хăйсем енне чĕнӳллĕн илĕртсе,

Хĕвел пек ункăн-ункăн
Йĕп çинçĕш пайăркаллă çутине сараççĕ...

Епле илемлĕ каçĕ!

Тиха хăравлăн кĕçенни,
Шур качаки сасси
Е чăтлăхра ват карăк авăтни
Илтĕнкелет хутран-ситрен.
Чăнкăртатса илет çаран енче йĕс шăнкăрав.
Шиклентерсе ярать пăши турат хуçса утни.
Шыва çупать те хӳрипе шăла-и е çăрттан —
Хумсем чупаççĕ,
Сарăлса çут кăшăл-ярăмра.
Çут тĕнчене мухтать хаваслă шăрчăк...

Ытарайми тăван кĕтес —
Сăрт-туллă,
Атăллă,
Çырма-çатраллă Чăвашьенĕм!
Мĕнпе эс тыткăнланă сĕм авал
Йăх пуçĕсен чĕрисене?
Тен,
Тертлĕ вăрăм çулпала утса тухса
Ытла ĕшеннĕн,
Кунта вăхăтлăха вĕсем пĕркенĕ
Кашмапа хӳшшисене,
Вара — ĕмĕрлĕхе ял картисем çĕкленĕ?..
Е тупайман-и Çĕр çинче
Илемлĕрех,
Пуянтарах та ăшă вырăн? —
Сахал-и тĕнчере сăрт-ту,
Уй-хир,
Вăрман та тинĕс!
Мĕскершĕн çакăнтах —
Мăнаçлă Атăл хĕрринчех —

Тымар ярса,
Асаттесем вучахсенче вут чĕртнĕ,
Тĕтĕмсене çултан-çул çăрараххăн кăларса?..
Шăпа-и е нимрен хăватлă аслă туртăм,
Е чун хавалĕ чĕннĕ,
Хăвалană вĕсене
Юханшывсем, тусем, пушхир, тӳремлĕх урлă,
Е — вăрçă, выçлăх, чир-чĕр, хĕн-асап?
Е катаклизм текен истори мурĕ урнă,
Тин чăмăртанна несĕл шăпине
Тĕпрен улăштарса?..
Ку — пирĕн юн тумламĕнче упранакан
Таса,
Чи хаклă вăрттăнлăх,
Пĕлсемĕр.
Çакна çич ют тени
Пăтранна чĕптĕм ăсĕпе
Анланайман хальччен.
Нихçан та ăнланаймĕ!
Çавăнпала эпир тусан пулман —
Пурнатпăр,
Тар тăкса,
Мăнаçлă Атăл хĕрринче миçемĕш ĕмĕр...

Ытарайми тăван кĕтес!
Асаттесем ахальтен мар
Ĕмĕрлĕхе савса пăрахнă-мĕн сана.
Пиншер çул ăс якатнă чĕлхерен
Чуна çатăрлакан янравлă сăмахсем тупса,
Ят панă çăлкуçна,
Сăрт-тусене,
Юханшывпа хир-вăрманна.
Хӳтленĕн улăп-паттăрсем ирĕклĕхне санне,
Тăван кĕтесĕм,
Юн тăкса,

Тăван чĕлхемĕре,
Йăх тымарне куç пек упранă.
Ятаганпа орда сăнни,
Эсрел-хан нухайкки те
Тĕп тăвайман сан ăруна
Çак аслă çĕр упранăран ĕрчевлĕ тымарна,
Ĕçлевçĕ халăхăм,
Раççей чĕнсен сарăлакан çуначĕ хŭттине,
Эс килĕшнĕ унпа тăванлăн,
Туслăн пурăнма —
Тав,
Аслă халăхăм,
Сана! —
Хальччен эс вăхăт тĕтринче çухалăттăн,
Пулсан тăвансăр,
Пĕр-пĕччен.

...Кĕрченĕн кивĕ самана,
Çĕр çиййĕн вĕçнĕ хĕрлĕ ялавсен
Хĕлхемлĕ çаврăçилĕ.
Хĕрелнĕ ĕмĕр анăçĕ тин пуснă вăкăр мăйĕ пек.
Трос-шăнăрлă чукмар-чăмăрсене çĕклетнĕ
Чăрсăр,
Тŭрĕ çилĕ —
Йăваш чăваш та хăюлланнă майĕпен,
Саманине кура.

...Мĕн чухлĕ çутă çĕр çинче!
Çын çутнă çăлтăр-хĕвелсен шутне пĕлейĕн-ши?!—
Мильярд хĕвел,
Хăрушă уçлăх тунсăхне çĕнсе,
Хура каçсен тĕксĕмлĕхне сирсе,
Çĕн çуртсене хăт ăшшипе кĕрсен,
Ĕпле çын кăмăлне çĕклет
«...ПЛЮС ЭЛЕКТРИФИКАЦИЯ» тенин пĕлтерĕшĕ!

Хӗвел сӑрнай калас самант,
Тавралӑха ҫӗнелӗвӗн тӗлӗнмелле тӗсӗсемпе
Илемлетсе,
Ҫывхарчӗ майӗпен.
Ҫӗн тусӑм Тайӑр
(Вӑл ӑстаҫӑ мӑнукех!),
Дант ертӳҫи Вергилий евӗр,
Тӗп ҫулӗнчен ҫын пӑрнӑ Атӑл тӗпнелле
Илсе анать мана..
Ҫилхеллӗскер,
Ҫиллес арӑслана асилтерет вӑл,
Анчах гитари кӑмӑллӑн тӗнкӗлтетет хӗлӗхӗпе -
Ун чӑрсӑр шухӑшне, тен, кӗвӗлесшӗн...
Прожекторсен ҫути котлованта выляннӑн
Унта темле титан-ҫын мӗлкисем
Мӑнаҫлӑн хускалаççӗ.
Питсем ҫинче — тӑваткӑл хӳтлӗхсем.
Пӑхаççӗ те ҫав улӑпсем асамлӑ кантӑк витӗр —
Куҫ вӑйӗпех чӑрт! ҫех ҫиҫтернӗн ҫиҫӗм,
Кӑвак хуппи шевли те вут-хӗлхем сапса,
Хурҫа сыпӑнтараççӗ, шӑратса.
Хӑватлӑ экскаваторсен,
КрАЗсен кӗрлевӗ
Пӑхаттирле симфони пек ҫӗклет ман кӑмӑла.
Вара — хум хыççӑн хум васканӑ пек,
Пуҫлаççӗ ҫуралма кӗске е анлӑ йӗркесем.
Анчах... чӗтренкӗ сӳтӗн пек мӗлке
Тухать те тӗттӗмрен мала
Сӳпӗлтетет-йӗмпӗлтетет,
Чӗрре кӗрсе.
— Татах мухтав юрри юрлан?
Пур пафос, чӑнлӑх — ҫук...
Ҫитӗнӗве анчах ырлан,
Чӗлхӳ те пыл та ҫу.
Йӗркесӗрлӗх, ҫитменлӗхсем

Ӑçта та лӑк-тулли.
Эс пур шыратӑн меллӗ сӗм —
Кала, камсем валли?
Çынна хӑй мӗнлерех, çапла
Ӳкер, ӑнлан мана:
Шалтан, тултан ре-а-лист-ла,
Кӗртмесӗрех тӑна.
Титан та улӑп ӗмӗлки...
Хӑй — пӗчӗк çын — ӑçта?
Таса, пуян чун, ӗмӗт-и?!
Халь хаксӑр ку, хӑта.
Çур пин тухсассӑн ӗç укçи —
Пулать сервант, трельяж...
Какӑриччен кавле те çи
Кулач та тӗрлӗ аш.
«Шуйттан шывне» яр хырӑма —
Хупахалла вӗçтер.
Тӑкакӗ каймӗ харама —
«Çӳлти тусна» ӗçтер:
Вара — туян май килнӗ чух
Коттеджлӑх сӑр, хӑма...
Мӑскал пулсан, кирлех-и чун?
Айван-çке эс, эх-ма!
Курма пӗлместӗн çӗннине:
Çӗнни вӑл — «Жигули»,
Гараж, тираж, камин умне
Вырнаçнӑ хӗр кулли...
Культура çитеймест? Эккей,
Хурлан çӗр сыннине?!
Пуçна ан ват — ме, тыт черкке,
Сӳнтер ӑш суннине.
Тӑван чӗлхе? Упратӑрах
Ӑна ялти кукка.
Мӗн? Тӗп тымар? Э-э, хӑртӑрах!
Мӗн кирлӗ «куккука»?

Паян — кунта, ыран — лере:
Çӳреп вĕçсе-куçса
«Йăвасăр», хăтсăр тĕнчере —
Тӳлеччĕр çех укçа.
Йăху, юрру, чĕлхӳ — веçех
(Ĕм «чăнлăх тăварне»!)
Чăмлак пек лекĕçĕ кĕçех
Индустри çăварне...

— Палларăн-и, ыр вулакан,
Мĕлке-хвилосăха —
Чĕлĕмçĕсен кĕтесĕнчи «пуçтах пихампара»?..
— Ĕçчен мещен вăл,—
Тет çĕн тусăм Тайăр,
Тарăхса,
Салхулланса кайса.
— Кунçул йĕкелĕ мар вăл,
Мăртăхнă çăпанĕ:
Ун йӳçĕ вачĕ аркату наркăмăшне упрать...

Тул çутăлса пырать.
Утатпăр котлован тĕпне сукмак спиралĕ тăрăх.
Саманасен юххи хăварнă
Тĕрлĕ тĕслĕ никĕсе тĕпче-тĕпче...
Сĕм авалхи темле чĕрчун пек курнакан
Ĕçлевçĕ земснаряд хӳри —
Мăн пăрăх —
Янрать ĕнернĕ хурçă хĕлĕхле:
Çĕлен пек чашкăрса шуçать шĕветнĕ юшкăн —
Пульпа —
Тимĕр тыткăнта.
Тухать те пĕрхĕнсе фонтанĕ унăн ирĕке,
Ĕшеннĕ улăп тăприлле сап-сар сăрт-ту пулса,
Çынна итлес хаваллă Атăла
Хĕсет çыран енне...

Çĕнелĕвĕн ытарайми хитре тĕнчи —
Ĕç йĕркеленĕ космос —
Куç умĕнче,
Хăрушă «тамăк» мар...
Анатпăр Тайăрпа пĕрле
Аэродром пек яп-яка чул-монолит çине.
— Ку — ĕмĕрсен юшкăнĕнчен хăтарнă çĕр хуппи,—
Ăнлантарать ман çамрăк тус-ертӳçĕ.
— Ăна эпир хастар тус-йышпала
Хырса,
Шăлса,
Çуса
Хăр тусантан та пылчăкран тасатрăмăр.
Вара хупларăмăр ĕç тарĕпе нӳретнĕ виткĕчпе.
Истори вăйĕ çăрнă тимĕр-бетона
Ĕмĕрлĕхе хыватпăр тăн-тăн никĕсе —
Таса çĕрте çĕкленĕ вăл мăнаçлăн,
Çĕр хуппипе ун хушшине кĕреймĕ çĕрĕк юхăм
Сăрхăнса...

Прожекторсен çути шуçăмпала шуралнăн
Котлованти асамçă-улăпсем,
Ахаль ĕçлевçĕсем пулса тăрса,
Куç вăйĕпех чăрт! çех çиçтернĕн çиçĕм,
Кăвак хуппи шевли те вут-хĕлхем сапса,
Хурçа сыпăнтараççĕ, шăратса.
Хăватлă экскаваторсен,
КрАЗсен кĕрлевĕ
Пăхаттирле симфони пек çĕклет ман кăмăла.
Çавна туйса пулас,
Ĕçлевçĕ-юрăç Тайăр,
Каркас çине ларса,
Пуçларĕ юрă:
«Роба, роба —
Паттăрсен ĕç тумĕ,—

Шыв витми, вутра çунми брезент.
Ĕççыннин таса ятне хур тумăн,
Тăхăнса тухсан сана ĕçе.
Канăçсăр, маттур, пуçтах романтик
Çийĕнче çуркаланса, ĕнсе,
Эс ăçта кăна çитсе курман-ши,
Саманана пире ĕçе чĕнсен?
Хумханса, эпир çул умĕн ларнă
Çутă ĕмĕт чĕртнĕ вут умне —
Ун кăварĕ пуля пек шăтарнă
Чи малтан ман ăрăвăн тумне.
Роба, роба,
Халь ак эсĕ çурăк,
Тăвăл витĕр тухнă парăс пек.
Сан çинче çук питĕ выран урăх:
Сарăхнă йăлт эс ĕç тарĕпе.
Сан тĕсӳ халь — кивĕ бронза тĕсĕ.
Чаплă тĕс! — вăл килĕшет сана:
Витĕмлĕ вăйпа кĕрнеклĕх эсĕ
Куçкĕрет кӳрсе тăран çынна.
Çавăнпах пуль эс, ĕç тумĕ, чăн та,
Тивĕçлĕ патвар çĕр хуçине.
Çĕр çинче епле тăрать вăл тăн-тăн,
Хĕвеле йăтса ик хул çине.
Роба, роба,
Кивелетĕн хăвăрт.
Ĕмĕрӳ кĕске те пит хитре.
Юлашки хут эп сана кĕç хывăп,
Уйăрса ху ăшăтнă ӳтрен.
Савнă тумăм, пĕл, шăпу сан сумлă:
Вăхăт çитĕ — ĕçченсен тумне
Пуля тивнĕ шинельпе пĕр çумăн
Хурĕç революци музейне».
— Пуласлăх никĕсне хывакансем,
Йӳтенĕ «пихампар» пек нăйкăшуллăн

Сире нихçан та «пĕчĕк çын» теме хăяймăп эпĕ:
Эсир куллен-кун тăвакан ĕçсен мухтавлă ӳсĕмĕ
Мана хавхалантарнă самантра
Хитре сăмах та хăш чухне сăвва кĕрсе вырнаçĕ,
Гипербола караппăл евĕр сарĕ çунатне
Поэзи тӳпине ыр ятăра çĕклесшĕн.
Тасалăхпа илем палăрăмне
Е çĕнелсе çуралакан ăс-чун килĕшĕвне
Асăрхасассăн сирĕнте вара
Куççулĕм вĕриччен хавасланатăп эпĕ,
Тăван чĕлхемĕр кĕслине юрлаттарса:
Ĕçре эсир кашни-пĕр паттăр мар-и!
Анчах...
Сиртен пĕри пулас, ав, вилĕ-ӳсĕр,
Килне çитмен — кӳлленчĕкре кӳпчет?..
— Ах, путсĕр!
Сиртен пĕри пулас — инке-хĕрарăм! —
Тĕп урампа тайкаланса иртет?
— Мăнтарăн...
Сиртен пĕри — тен, кашкăр унăн амăшĕ?! —
Хăй арăмне урса кайса вĕтет...
— Намăс!
Сиртен пĕри, каю турачĕ евĕр,
Тĕп тымартан тиркевлĕн сирĕлет...
— Киревсĕр!
Сиртен тепри каппайланать: «Эп—халăх!»
Хăй маннă ашшĕ-амăш чĕлхине...
— Юлхавлăх?..
Сиртен тепри — те ăстăнĕ аманчăк —
Этем ятне çĕртет ыр çемьере...
— Чĕмере!..
— Ытла эс, Тайăр тус, хаяр...
— Эс — шеллешке...
Ӳркевлĕхпе сӳрĕклĕхре шалтан хăраканах
Эпир хăш чух пуçран шăлма та хатĕр:

Йĕрке-тирпей те хăт çук ăшĕнче,
Анчах... ĕçле пĕлет.
Эппин, ĕçлетĕр,— тетпĕр,—
Ытти-хăтти... процент шутне кĕмест...
Леш пур, çавна кура, пурнать реххетлĕн,
Эрех-сăра лӳксе, апат çĕртсе:
Илемшĕн — суккăр, хурлăхшăн — хăлхасăр,
Тăмсай та чĕмсĕр, чунĕпе хавшак...
— Çапах, эс, Тайăр тус, хаяр.
Тӳрре пулма аван...
Анчах та ăслă аслаçу
Пура ними пуçланăн
Çапла каланă, чакмине чаклаттарса,
Юптарарах:
«Юманлăхра ӳснĕ тӳр юман
Юмансен хушшинче хур курман.
Кукăрăлма — йышран вăл юлман...
— Хăрма паман каш-каш чĕр вăрман.
Шăрăхпа, сивĕпе кĕрешсе.
Çирĕпленнĕ тăн-тăн кĕреше
Чутла-чутла ярар никĕсе,
Емĕр-ĕмĕр лартăр çурт, тесе...»
— Эппин, манман...
Куллен-кунта,
Киревсĕрлĕх те сӳрĕклĕх,
Ӳркевлĕх те тӳрккеслĕх тĕл пулсан,
Эп,
Хурланса кайса,
Çунатăп, тертленетĕп,
Вĕсем пирте пурришĕн айăплă пек хам та,
Хальччен туман пек кирлĕ чухлĕ тивĕçе.
Сăввăмсенче чан çапас чух, тен, эпĕ шăппăн ларнă
Е чăмăра çĕклес чухне те алă çупнă айванла...
Тен, ман умрах тус-тантăшсен ĕненĕвне вăрланă
Е шăршлă сурчăкпа варланă тăрă çăлкуçах...

Тен, çын чысне таптанă чух та
Эпĕ курмăш пулнă,
Ĕçчен хутне кĕре пĕлмен чи кирлĕ самантра...

— Этем,
Санра эп идеал,
Таса илем шыранă! —
Шыранă çех пуль çав,
Вĕсемшĕн харсăр кĕрешмен...
Ку — эпĕ...
Эсĕ, Тайăр тус, епле?
— Итле:
Чĕр хунавран ем-ешĕл сад ӳстертĕм —
Атте-анне, ялйыш мана ырлать.
Ачалăх кăвакарчăнне вĕçтертĕм,
Хаваслансa çич хĕлĕхе ĕнертĕм —
Чĕлхе вĕçне чĕкеç ларса юрлать.

Çĕн хулара çурт хыççăн çурт хăпартрăм—
Ĕпле хитре урам унта юлать!
Шыравлă яшлăх кăйкăрне ăсатрăм,
Хавхаланса çич хĕлĕхе хускатрăм —
Чĕлхе вĕçне чĕкеç ларса юрлать.

Халь ГЭС тăватăп. Ун хăвачĕ кайĕ
Çĕршывăм тăрăх... Атăл йăл кулать!
Ун шур чарланĕ — ман çĕн ĕмĕт-кайăк.
Çич хĕлĕхĕм янравлă — çавăнпа-и
Чĕлхе вĕçне чĕкеç ларса юрлать.

Ĕçре ыр ят илтме эп тивĕç пултăм:
Ырри çех пурнăç никĕсĕ пулать.
Емĕтĕмре вут кайăкне эп куртăм!
Хаваллă эп, çич хĕлĕхĕн пĕр туртăм —
Чĕлхе вĕçне чĕкеç ларса юрлать.

Илем тĕнчи те уçрĕ илĕртӳллĕн
Вăрттăнлăхне — ăсталанма юрать.
Мĕн чул çĕн шухăш парнелет пĕлӳлĕх!
Çич хĕлĕх кĕвĕ хывнăн килĕшӳллĕн
Чĕлхе вĕçне чĕкеç ларса юрлать.

Çунат сарма вăй пачĕ Аслă Пĕрлĕх —
Ăна, чĕрем, ĕмĕрлĕхе юрат.
Çĕршыв тулли ман тус, тăван та пĕлĕш.
Эй, кĕрр! кĕрле пĕр саслăн, çичĕ хĕлĕх,—
Чĕлхе вĕçне чĕкеç ларса юрлать.

...Хум çийĕпе вылять ăрша.
Утрав хыси çинче,
Чĕвен тăрса,
Хаярăн кĕçенсе
Пуçларĕ çапăçу ик çилçунатлă ăйăр:
Пĕри — шур пĕлĕт ăмăрли —
Çулта,
Тепри — чалак, хыткан та çамрăк.
Ваттин,
Хăнăхнăскерĕн çĕнтерме,
Пулсан та вăйĕ,
Ури час-час шăвать вĕт чул çинче...
Калас килет ăна: «Çитет! Ан çапăç! Чарăн!
Намăсланмасăр килĕш шăпупа...»
Анчах — ват ăйăр парăнмасть —
Тулать хăй ывăлне,
Тапать,
Сар шăлĕпе çыртать,
Çăварĕнчен ун юнлă кăпăк çĕрелле юхать.
Ак... чĕркуçленчĕ! Ак... ӳкет!
Тапаçланса выртать!
Юлашкинчен пулас вăл хаш! сывларĕ...
Мĕн пулчĕ çамрăк ăйăра? —

Мĕскершĕн,
Тулхăрса,
Шăршлать вил ашшĕне салхуллăн?
Чĕрнипеле çĕре чавать хăй — кукалет,
Вĕри тутипеле сив тутана кăшт сĕртĕнсе илет,
Чуптунăн...
Анчах та нумая пырать-и хурлăхĕ чĕрчунăн?!
Чĕнӳллĕн кĕçенет хăвалăхра кĕсре —
Хăлхисене чанк тăратса итлет те çĕнтерӳçĕ,
Вут-çулăмпа тулать ун юнĕ.
Вара — тапса сикет кĕтӳ умне
Çунатлă çĕн ертӳçĕ...

Мăнаçлă канăç каçĕ анăçа
Çил кăларçах васкавлăн тарчĕ.
Çĕн кун,
Тăван тĕнчемĕр çутине çутса,
Васкать кунта.
Мĕнпе вăл савăнтарĕ ман куçа?
Кĕрейĕ-ши çĕнелĕвĕн янравлă эпосне ун ячĕ?

...Астăвасса кунта пĕр пĕчĕк ялччĕ.
Путек сиксе каçмалăх çырмине
Чăваш кашни çу умĕн пĕвелетчĕ тар тăкса:
Пушар тухсассăн — сӳнтерме,
Хур-кăвакал, чĕп иленме,
Кĕтӳ уйра чухне — пĕве пулатчĕ тапăр.
Чипер инке те аркă тавăрсах
Кунта кипке чӳхетчĕ шăмпăр-шампăр...
Иртетчĕ хĕл,
Çитетчĕ çуркунне —
Юр-пăрлă шыв тĕпрен хырса каятчĕ пĕвене.
Путек сиксе каçмалăх çырмине
Чăваш татах тислĕкпеле пӳлетчĕ тарăхса —
Пĕви те,

Пĕчĕкскер,
Асилтеретчĕ вĕршĕн йăвине...

Халь,
Çĕр лĕпки çинче тăрса,
Тавраналла пăхатăп та — каятăп тĕлĕнсе:
Мĕн чул хевте ĕçчен этемĕн вăйлă аллинче!
Юнташлă шăллăма —
Кĕрнеклĕ йĕкĕте —
Хавхаланса итленĕн.
Шухăшлатăп:
Тимĕр-бетон анчах-и хывăнать
Çĕнелĕвĕн тĕреклĕ никĕсне?!—
Тӳсĕмлĕхпе хастарлăх,
Шанчăк,
Вăхăт,
Ĕçре,
Çапăçура упраннă ĕненӳ,
Кĕрешӳре туптаннă пĕрлĕх вăйĕ,
Пĕр шухăшлă,
Тăванлă йыш ăшши,
Саманасен ыр ĕмĕчĕ,
Çынсен пурнас хавалĕ...

Хумсем хăварнă юшкăнпа вĕт-шакăра вара
Кунçул юххи йӳçлĕхелле хăвалĕ...

...Мĕн чухлĕ çутă Çĕр çинче!
Çын çутнă çăлтăр-хĕвелсен шутне пĕлейĕн-и?!—
Мильярд хĕвел,
Хăрушă тунсăх уçлăхне çĕнсе,
Хура каçсен тĕксĕмлĕхне сирсе,
Çĕн çуртсене хăт ăшшипе кĕрсен,
Ĕпле çын кăмăлне çĕклет
«...ПЛЮС ЭЛЕКТРИФИКАЦИЯ» тенин пĕлтерĕшĕ!

Алăри асамат

Хĕвеллĕ çумăр юрласа лӳшкерĕ.
Сасартăк, ял варне ӳкес пекех,
Çиçме пуçларĕ асамат кĕперĕ—
Эп лараймарăм кив пӳртре текех.
Вĕçтернĕ май çемçе пускурăк тăрăх
Шаркамасен шывне чăрт! сирпĕтсе
Сиккелесе илетĕп тăррăс-тăррăс,
Кĕтрет патне çитмен-ши-ха тесе.
Паласĕ ун умрах çиçет илемлĕн —
Çунатланса ун тăрăх çӳлелле
Çĕкленессе ĕненнĕн, ĕмĕтленнĕн
Çĕр туртăмне туйăмастăп темелле.
Ĕпле илем умра! Унта çитесчĕ
Çак самантрах — вара шур хут çинче,
Тĕссен килĕшĕвне уçса, чĕртесчĕ
Çав илеме,— кур, тĕлĕн, çут тĕнче!
Мĕн чухлĕ сăрă! Асамат кĕперĕ
Çич тĕслĕ çех теме хăяканран
Кулатăп: çутçанталăкăн ĕнерĕ
Тĕссен асамлăхне тартать унран...
Çырма хĕрне ĕрĕхтерсе анатăп
Çара уран, çĕре аран лексе.
Хам вăрттăн тĕлĕнтермĕше сăнатăп,
Ĕмĕтĕмри тĕлпулăва кĕтсе.
Пĕве умне çитсессĕн, асăрхарăм:
Умри илем татах çӳлте, инçе!—
Çаплах вăл илĕртӳллĕн, шĕл-кăваррăн

Чĕнет, тĕсĕсемпе çиçе-çиçе...
Вара эп, кӳренсе кайса, салхуллăн
Ĕсĕклеме пуçларăм... Эх, асап!
Тен, чылайччен пыратчĕ пуль çав хурлăх –
Килетчĕ ушкăн пĕлĕт капланса...

Анчах, пуçран шăлса, çапла каларĕ
Ял тимĕрçи — Хура Мĕтри пичче:
— Кур: асамат, сӳнсе, çĕре тумларĕ —
Шыра çав тĕссене эс çĕр çинче...
Эп лăплансах çитменнине кура-ши:
— Атя-ха,— терĕ,— тимĕрç лаççине.
Эппин, эс, çĕмел пуç, Энтип тавращĕ?
Илтсеччĕ сăвăç пулĕ тенине.
Шухăшласассăн, эп те, эс те, шăллăм,
Туятпăр пуль пĕр ĕмĕт ăшшине...
Тĕкки шалта хускалчĕ шăлтăрт-шăлтăрт—
Кĕретпĕр хăрăм сăрнă лаç ăшне.
Эй, тимĕрçĕ лаççи — асамăç пӳрчĕ!
Эп тав тăватăп ырă мехеле:
Кунта кĕме тахçан ман кăмăл пурччĕ —
Чăнах илемлĕ ăшĕ ун епле!
Мĕскер-мĕскер кăна кунта курмастăн —
Ĕç хатĕрĕ анчах çĕр тĕрлĕ, тен?!
Кашнин пĕлтерĕшне уçасшăн ăстăн —
Асли мĕн каласса çунса кĕтен.
Сехĕрленсе те тĕлĕнсе итлеттĕм
Лаçра çуралакан сасăсене...
Халь — çиçĕм сирпĕтсе, султтан ӳхлетрĕ,
Пуçларĕ мăлатукĕ ташшине.
Халь — вĕркĕч авăрне мана тыттарнă! —
Ăна аялалла пусмассерен,
Вулкан çăварĕ магмăна тустарнăн,
Сывлать пек ахăрса вĕре çĕлен.
Вучахалла пăхатăп та куратăп:

Ак çакăнта-мĕн аннă асамат.
Çак тĕссене нимрен ытла юратăп —
Тав, ĕмĕте чăн тунă ыр самант!
Илемлĕн улшăнать пĕр вĕçĕм çулăм—
Е хĕрлĕ вăл, е симĕс те сенкер.
Çын аллинче ĕçлет вăл тăрăшуллăн —
Хăрушă мар! Çакна, Энтип, сĕнкер...
Тарланă хам, çапах епле хаваслă —
Хаш-хаш! сывлаттаратăп вĕркĕче.
Эп çутçанталăк евĕр халь хăватлă —
Çĕн хĕвелсем çутасшăн пек кĕçех...
Мĕтри пичче хĕскĕччипе типтерлĕн
Илет вутри хĕп-хĕрлĕ тимĕре,
Авать те лапчăтать ăна ĕнерлĕн —
Йĕр хăварса вĕçет хĕм тĕттĕмре.
Шăп çавăн чух чунтан сава пуçларăм
Çын чĕртнĕ асамат кĕперрине.
Чĕрĕлĕхри чĕр сăрсене куçларăм
Ăнкарнă май вĕсен килĕшĕвне.
Ват çын сăмахĕ маншăн пулчĕ имлĕ:
Этем те çутçанталăк ĕçĕнче
Сӳнми илем палăрăмне эп тимлĕн
Шыра пуçларăм аслă çĕр çинче.
...Калча йĕппи, хĕрсе çитсе шăтсассăн,
Ӳссе кайса пучахлансан хитре,
Эп, вăрттăн ăмсанса, сывлатăп ассăн,
Куçа карса илет вĕри тĕтре...
Мĕн чухлĕ тĕс хирте! Вĕсем пĕр вĕçĕм
Улшăннине сăнанăн савăнса
Калатăп: акаканăн тертлĕ ĕçĕ
Ялан — çултан-çул — пытăрччĕ ăнса.
Вĕçсе шур пĕлĕтсен çĕмелĕ айĕн
Хăватлă кĕмĕл кайăкпа инçе,
Çĕр сăн-питне çӳлтен курма пит лайăх
Кăнь пуличчен çав ĕмĕт сăпкинче.

Анчах ку — маншăн мар. Ман ырлăх кансĕр –
Ярхан ярса кĕпе çухавине
Тусанлă сукмакпа эп утаканччĕ
Çара уран ăршаллă хир енне.
Пĕлетĕр, йăлтăр-йăлтăр асаматăн
Ик аякки сип-симĕс те хура.
Эп çавăнпа ем-ешĕле саватăп,
Хура тăпра тĕсне — çавна курах.
Ыраш пусси, пиçме пуçланăн пĕрчĕ,
Лĕп çил хир тинĕсне хумхантарсан,
Хăй — асамат кĕперĕ: чăн та, пĕртте
Тӳперинчен вăл кая мар, курсам!
Тухатăп-и хире пыл çунă хыççăн,
Кĕретĕп-и вăраннă вăрмана —
Куçсем умне ан курăнтăр çех хыркăн! —
Кашни ӳсентăран тăван мана.
Йăх пуçĕшĕн тĕнчемĕр пулнă чунлă:
Элчел çитсен те «кайнă» вăл, вилмен...
Йăлт — йывăç та, çăлкуç та, вут та, чул та —
Чĕрĕскерсем, çынран тип шар кĕтмен.
Килес этемшĕн юлтăр пур иленкĕ —
Чечек вăййи, çаран, каш-каш вăрман...
Те çавăнпа эп илемпе киленнĕн
Сăлтавсăр пĕр турат хуçса курман.
...Кĕрхи вăрман — тĕссен сӳнми пушарĕ!
Илемшĕн, çутçанталăк, тав сана!
Нихçан кунта ан çиттĕр вут-хĕм шарĕ —
Çунсан та çунтăр сăр шевли кăна.
Кĕрхи сăрсем...
— Кала-ха, çутçанталăк:
Ăçтан тупатăн эсĕ вĕсене?
Мухтавсăр ăвăс... Ватă, хăрăк, тайлăк,
Юман çумне тӳнес пек тĕршĕнет.
Анчах епле хаваслăн, тараватлăн
Çулçисене вăл парнелет çĕре! —

Элчел ситнишĕн кулянмасть-тĕр ватлăх:
Кашни çулçи ун — çулăмлă чĕре.
Шур акăш евĕр хурăн та вĕçтерчĕ
Тĕкленнĕ чĕпсене кĕрхи çилпе.
Пике-пилешĕн те çук пулĕ терчĕ —
Шăрçисене тирет çĕлен çиппе.
Уяв тумне тĕрленĕ, пӳштĕр сăрнă,
Хăлхи алки тата епле хитре! —
Туя кайма васкать нар пек пӳ-сăнлă
Инке-кăпчанкă хӳтĕ ĕшнере...
Çак ырлăха, çак илеме тирпейлĕн
Упрасчĕ пирĕн ĕмĕрсем валли —
Пĕр калчана, пĕр турата тиркевлĕн
Ан тĕкĕнтĕрччĕ чунсăр çын алли.
Анчах та çын тени хăш чух киревсĕр...
Те чунĕ кӳтнĕрен хаярланса,
Суккăрланать те, урнă выльăх евĕр,
Хăйне юн панă амăшне манса,
Манса çех мар пуль, курăмми пулса,
Хĕн кăтартать... Йĕпренчĕклĕн кулса,
Сӳлккерехскер, вăл тĕп тума ăна
Хаярăн хатĕр, ирĕк пар кăна...
...Кăçал çанталăк тăчĕ шутсăр шăрăх.
Хавшарĕç йывăçсем, ĕнет ана.
Кĕтмен çĕртен ӳкер сӳнмен пĕр шăрпăк —
Çав самантра вирт кайĕ таврана.
...Хула канатчĕ: ĕç эрни вĕçленнĕ,
Сасартăк репродукторта: «Пушар!
Пурте пĕр харăс, пĕр пулса, çĕкленĕр —
Вăрман çунать!.. Васкавлăн пулăшар!..»
Вара — асар-писер, сехмет пуçланчĕ,
Çынсем каларĕш, вăрçăри пекех.
Пуç сийĕн тĕтĕм варкăшса капланчĕ,
Умри вăрман та курăнмасть текех.
Каçса çĕршер-пиншеррĕн Атăл урлă,

Çĕклентĕмĕр хаяр çапăçăва.
Тек çук пуль çĕр çинче кун евĕр хурлăх!
Эх, тĕтĕмĕ, шăрши епле çăвак...
Епле хăрушă! Урнă вут эсрелĕ
Ахăрашса асать чăтлăхсенче —
Вĕре çĕлен çич пуçлă, çич хӳреллĕ —
Вутпа, хĕмпе сывлать мĕнпур енче.
Тӳнет те ахлатса вут хыпнă йывăç —
Кĕл-тĕтĕм çĕкленет тӳпе таран.
Умра, хыçра, çӳлте, çĕрте — вут! Йывăр.
Сывлатпăр тĕтĕмпе аран-аран.
Тин çех вирт кĕтӳне хупăрласаччĕ —
Халь хăй вăл тыткăна илет пире.
Тин çех, тин çех вут сылтăмра асатчĕ,
Халь — çавраçилĕ урăх ĕшнере.
Куçа шăлса та чыхăнса кĕретпĕр
Атакăри пекех пуль çав вута.
Çĕнетпĕр çĕнессе — пурте пĕлетпĕр,
Çапах... кăшт шикленетпĕр, тупата.
Кĕрлет хăрушă çулăм. Вăхăт-вăхăт
Вĕçет пуç çийĕн мина — вутпуççи.
Мекĕрленет бульдозер — хурçă вăкăр
Танк пек, кăклать йывăççене çĕççи.
Ĕçлет вăй çитнĕн пуртă, çивĕч пăчкă,
Брандспойт пĕрĕхтерме пуçлать шывне.
Минĕретет йӳç сĕрĕм. Шутсăр пăчă.
Ак йăванать пĕри, тепри — тӳнет...
Анчах — чакмастпăр, тӳнессе пĕлсен те,
Тискер вăя памастпăр алхасма:
Вăл, чармасан, йăлтах çунтарĕ-ĕнтĕ,
Чĕрĕлĕхе пултарĕ тĕп тума!
...Виç талăкран вут парăнчĕ. Шăп пулчĕ.
Вăл аснă вырăн пушă, хуп-хура.
Çулне унне ĕçчен, хастар йыш пӳлчĕ
Хăй ирĕкĕпеле, приказсăрах.

Атака хыççăн çурăк, çунăк тумлă,
Хура пит-куçлă йыш канма ларсан,
Ахаль шывпа пирус йӳççи те тутлă,
Паллах, пăсмасть ытти-хăтти пулсан.
Çар пек йыш хушшинче эп асăрхарăм
Ним тĕлĕнмесĕр çамрăк Тайăра —
Пухусенче юрланăн Виктор Хара,
Пуçларĕ вăл çынсем илтмен юрра...
Те кăмăл çĕкленни вăй пачĕ: темшĕн
Эп куртăм çĕнĕлле ĕçченсене —
Çак çĕр çинчи ытарайми илемшĕн
Вута кĕме те хатĕр çынсене.
Вут чĕртекен... килтех ларать, киревсĕр,
Шăлкаласа ват тулнă тип варне,
Каяш лӳксе анранă выльăх евĕр
Йĕклентерсе йĕпренчĕк çăварне.
...Мăкăрланать хура, пуш-пушă лаптăк
Арлан тăпри таран çĕр çуннăран.
Шăтаяс çук, тĕрĕссине калас-тăк,
Кунта çур ĕмĕр тилпĕрен, мăян.
Ман шухăшпа, ку пĕчĕк Хиросима,
Ман шухăшпа, ку — асăрхаттару...
Анчах та таврара — ем-ешĕл çимĕк,
Майлах пек тĕнчере лару-тăру.
Анчах та... тĕпсĕр тӳперен кĕр-çурлă
Кĕрлев илтсен, илеп иккĕленсе:
Мĕн пулĕ, Прометей парни — чĕр çулăм
Айван е ирсĕр аллине лексен?..
Çапах ăспа ырра эп ĕненетĕп,
Умри хастар çынсен пуласлăхне,
Чĕрĕлĕхе куç пек упрассине те
Çынпа ыр çутçанталăк туслăхне.
...Кĕрхи çилсем хĕвел пуси татаççĕ —
Шур пир валли хутасшăн пулмалла.
Тĕссем çаплах сӳнеççĕ, çуралаççĕ.

Çанталăк сивĕтет — юр çумалла.
Такамшăн çак ыр вăхăт чухăн пек-тĕр,
Кичем пуль хăшпĕрне хура кĕрте.
Анчах та çут тĕсрен пулать-çке спектр:
Курма пĕлсен, сăр пур мĕнпур çĕрте.
Хирте ешерчĕ уçăм — симĕс шуçăм.
Сап-сарă улăм урисен çути
Чи тĕттĕм каç шевле сапать пек уççăн —
Патнех пырсассăн, курнĕ йĕп çăрти.
Пĕсехине ак илемлетрĕ карăк,
Асаматран мăя туса ярса.
Мĕлтлетрĕ тилĕ ĕшнере каваррăн.
Вăрман кĕтет мана, палас сарса.
Анатăп вар тĕпне. Асра — çăв ирĕ:
Типсе çитмен-ха сывлăм, çавăнпа
Çеçкеллĕ курăка çулатăп вирлĕн
Çĕлен сăнни пек çивĕч çавапа.
Çăвар типсен — валак умне. Вăл — çывăх.
Тапса тухать çăлкуç сăрт айĕнчен.
Тултар та шăнкăр-шăнкăр йĕкĕр ывăç —
Тутан çĕр сĕтекне ăш каниччен.
Пĕррехинче асаматпа имлерĕм
Унта эп ывăçран пĕр пикене,
Унччен илтмен ачаш сăмах итлерĕм —
Çитмерĕ йĕкĕр ывăç иккĕне...
Анчах та хальхинче вар тĕпĕ... типĕ...
Валак та çук — чул çех выртать умра.
Ун лĕпкине варланă темшĕн тикĕт...
— Каçар, çăлкуç, çитменшĕн вăхăтра.
Каçар яш чух йăмра лартма пĕлменшĕн
Хӳкле сассиллĕ валаку тавра.
Халь каçару ыйтни, пĕлетĕп, мелсĕр:
Типни тепре шаркамĕ валакра...
Ял пурнăçĕ кунта, санран пуçланнă.
Халь шыв тени юхса кĕрет пӳрте.

Тен, çавăнпа сана ялйышăм маннă —
Çĕн çул эс тупнă, вăтанса, çĕрте...
Эппин, ман евĕр эс те кайнă, тусăм,
Ăçта чунтан кĕтеççĕ — çавăнта?
Халь эс çăлкуç-ши е пуралла пусă,
Е тинĕсе юхатăн çаврăнса?..

...Çĕн çул мана Чăвашьене çитерчĕ,
Вĕрентрĕ çĕр чавма, бетон çăрма,
Çĕн çăлкуçсен шывне савса ĕçтерчĕ,
Вăй пачĕ йывăр чух тӳсме-чăтма.
Кив кимĕ айĕнче чĕтренĕ чух та,
Çĕр каçнă чух паркра е пристаньре
Чĕрепеле пулас темен эп чухăн,
Хăртман пуль çутçанталăка пĕрре...
Çуртсем те илемлетрĕм, электрон та
Манпа туслашрĕ аслă заводра.
Пулсан та сăввăмра редиф * е рондо**
Çĕнĕлĕхе шырарăм пурнăçра.
Шырарăм çех-и? Çеçпĕл хушнă евĕр
Ĕçлерĕм эпĕ, çанă тавăрса.
...Урам. Чĕр юхăм. Моторсен кĕрлевĕ.
Çӳретĕп тунă ĕçĕме курса.
Умра — эп илемлетнĕ филармони.
Унта кĕрсе тухатăп çула май.
Театрта пырать, тен, «Шывармань»-и
Е «Арçури»... Кĕретĕп. Çын нумай.
Асамлă кĕвĕ. Балерина тĕк пек
Вĕçет — епле кӳлемлĕ кӳлепи!
Епле черчен! Чим, ан сывла, ан тĕкĕн —
Ванма пултарĕ чăнкăрт! илемпи.
Кунта та аннă асамат кĕперĕ,

---

* Тухăç халăхĕсен поэтикин форми.
** Франци сăввисен форми.

Кунта та — вĕçсĕр çĕнелӳ тĕнчи.
Сасартăк прима хускалать чиперрĕн,
Чĕрне вĕçне тăрать — ун ӳтĕнчи
Хевте шырарĕ кĕвĕ, çунатланчĕ,
Вара — çĕкленчĕ, вĕçрĕ çӳлелле:
Асаматран çул турĕ темелле...
Вăл анасса кĕтет, ав, яш атланчĕ.
Кашни хусканура мĕн чухлĕ шухăш,
Мĕн чул ачашлăх, ирĕклĕх, илем!
Мĕн чул хĕрӳлĕх, çамрăклăх та шухлăш!
Мухтав, илемшĕн çунакан этем!
Çак кермене те эпĕ илемлетнĕ —
Кунта кĕрлет халь опера, балет,
Ĕмĕтсене кунта эп çĕнĕлетнĕ,
Çĕнетнĕ, тен, хама та, кам пĕлет...
Вутран вĕри çухатусен куççулĕ,
Туянуран пин хут тăварлăрах...
Çиçмерĕ асамат пек пурнăç çулĕ —
Шырарăм унăн çăлтăрне вăрах.
Пулмарĕ кун ялан хĕвеллĕ, тĕслĕ...
Тӳпе те, Çĕр те, вăхăт та — йăлтах
Çĕнелнипе илемлĕ... Пурпĕр тĕксĕм
Çӳретĕп шухăшпа тăван ялтах.
«Хура хутпа» хура хыпар килсессĕн
Аннемĕрсем йĕни тухмасть асран.
Телейлĕ пулăттăм, манма пĕлсессĕн
Мĕн курнине... Ярас пекех ăсран
Пуçра чĕрпекленет те йĕплĕ шухăш
Чĕре шăнать тăм тивнĕ чечекле.
Те йӳнсĕр эп, те айванланнă шутсăр—
Çĕн ĕмĕтсемшĕн хама хам чӳклеп...
Çавна курах çитсе каймасть пуль хытлăх —
Шăла çыртап, ярас пек макăрса,
Сив çиллĕ, юрлă-пăрлă çумăр хыççăн
Шуралнă, çурăк ялавсем курсан...

Сывлăхăма кура салтак пулманшăн
Хурланнă чух çак çех хута кĕрет:
Комсомолла ударлă стройка маншăн—
Ĕçри этемшĕн — пулчĕ малти рет.
Ман ӳсĕме чĕнсен çĕн пилĕкçуллăх,
Ун ниминче эп кӳлĕнтĕм ĕçе.
Тухсан та çăвартан хăш чух вут-çулăм
Вăй ситнĕ чухлĕ турăм тивĕçе.
Хăюллă, уçă кăмăллă пулнишĕн
Савса пăрахрăм ĕçлĕ халăха —
Ун пĕрлĕхлĕ, мĕльюнлă аслă йышĕ
Вĕрентрĕ ĕненме малашлăха.
Ыратусем ӳссессĕн те чĕрешĕн,
Кунçул сивви шăнтсассăн та ăса,
Эп çĕнелӳшĕн виличчен кĕрешĕп,
Вилсен те вилĕп, илеме савса.
Ăста художник килĕшӳ шырамĕ
Куç хăнăхнă тĕсре, сăн-сăпатра...
Хĕвел таптанă Çĕр те — чĕрлĕх амăшĕ —
Çуратмĕ вĕсене пĕр самантра.
Этем çех хăшкăлать Çĕре (хăйне те!)
Илемлĕн çĕнетесшĕн тĕмсĕлсе...
Тĕнче курман сĕмсем савса сĕнетĕп
Сире, ĕçри çĕршывăн тĕсĕсем!
Сăрсен вăрттăнлăхне уçса, тĕпчевçĕ
Юмахрилле «асамлă хуранта»
Чĕртет те вĕсене — тĕссем çиçеççĕ
Цехра, çĕн асамат пек курăнса.
...Çавал енче — те çурçĕрĕн шур каçĕ?—
Кăвак хуппи шевлиллĕ çутăсем.
Сире валли çĕн асамат шыраççĕ
Унта ман çывăх ăрăмçă-туссем.
Вĕсен хули мана вучах чĕрттерчĕ
Хăй çуртĕнчи пĕр ăшă кĕтесре.
Ан сӳнтĕр унăн асамачĕ! Терт те

Ан хуçалантăр ман кĕрекере.
Халь маншăн аслă çĕнелӳ кĕрлевĕ
Чăнах та паттăрла симфониех.
Хĕвел ытамĕнче-и е çĕрле-и,
Пăхатăп тĕмсĕлсе крансем еннех.
Поэзи тĕнчине чун туртмасассăн,
Эп ĕçлĕттĕм унти йышпа пĕрле.
Тунсăхласа çитсен, сывлап та ассăн
Тухса утатăп стройка еннелле.
...Ак халь те тĕлĕнсе кайса çӳретĕп
Пин асаматлă тракторостройра.
Катмар цехсем ӳсеççĕ ретĕн-ретĕн
Чăваш çĕршер çул тар тăкнă уйра.
Хăш чух эп кăшт кĕвĕçерех сăнатăп
Монтажниксен «хĕвеллĕ кастине»:
Вĕсем халь хитререх пиртен — сăнпа та,
Ĕç тумĕпе те: кур-ха каскине —
Сăн-сăпата епле маттурлатать вăл,
Паттăрлатать те пулĕ, тупата.
Ах, яшлăх, яшлăх!... Иртрĕ вăл, çун, татăл—
Эп таврăнаймăп тепĕр хут унта.
Çĕн пилĕкçуллăх планĕ, халăх ĕçĕ
Хавхалантарнăран юрлас килет.
Тар тăкăттăм кунтах, анчах поэзи
Халь манăн юрату, асап, телей.
Талăкĕпех эп, тупаймасăр канăç,
Шыратăп ăшă, витĕмлĕ сăмах.
Монтажник ĕçĕнчен те тертлĕ ман ĕç —
Ытла та йывăр халь «тума сăнар»...
«Эмоци девальвацийĕ»... вулатăп
Литхаçатра. Тен, тĕрĕс çак чăнах? —
Е хам эп вăхăта туйми пулатăп,
Е вулакан ăнланаймасть мана...
Касмăкпала кăкарнă кăйкăр евĕр
Çыру сĕтелĕ хушшинче ларса

Халтан кайсассăн, çĕнелӳ кĕрлевĕ
Алăкăма татах ярать уçса.
Вара — поэзи сменинче çӳретĕп
Пин асаматлă тракторостройра,
Ĕçчен туссен «чун панчине» итлетĕп,
Хăш чух мана та леккелет кăра...
Кăшт каннă май шĕкĕлчесе тухсассăн
Çăлтăрсенчен тусан пĕрчи таран,
Час-час пулать-ха сывлани те ассăн,
Ытла хĕрсе кайни тĕ — хушăран...
Арçын йăли ку: сигарет чĕртетĕп,
Кĕрсе ларса чĕлĕмçĕсен йышне.
Сунатăп сывлăх: «Ĕçĕр ăнтăр!» — тетĕп,
Кăшт шӳтлени аван кун пек чухне.
Анчах та халь кунта хĕрӳллĕ тапхăр —
Пырать монтаж! Кашни самант шутра:
Кăлармалла часрах пĕрремĕш трактор!
Ку — пирĕн тивĕç, ку — чунра, асра.
«Ĕçчен сăмахĕ хурçăран та çирĕп»
Тени ĕçченсенчен анчах килсен,
Тылламĕччĕ чĕлхе вĕçне кĕсен,..
Анчах картран иртсе иртĕхекеншĕн,
Тав, пур райком, горком, обком, ЦеКа.
...Юртан хăтарнă хир калчи пек ешĕл
Ирхи тӳпе. Кĕретĕп çĕн цеха.
Вăрнар каччи, паллана газосварщик,
Çиçтерчĕ çиçĕмле асаматне —
Вĕрет ун шевлинчи тĕссен хăвачĕ!
Аса илеп ачалăх самантне!..
Çап-çут йĕр хăварса вĕри хĕм çунăн
Сопло минорлă кĕвĕ кĕвĕлет —
Çын аллинчи асамлă симĕс çулăм
Пĕр вĕçĕм çуралать, ӳсет, вилет:
Е мăкăнь çеçкилле çилпе асать вăл,

Е хĕрлĕ ялавла вĕл-вĕлкĕшет,
Е тимĕр суранне çуллать асаплăн,
Е сĕмлĕхпе хастаррăн кĕрешет...
Тĕнчемĕр илемне упрать пек ĕмĕр
Этем чĕри пек çунакан вутра.
Сӳнме памасть ăна хăюллă ĕмĕт—
Хушсах тăрать хĕрӳлĕх вăхăтра.
...Шухăшăмсен фантазилле çуначĕ
Пулăшнипе пуласлăха вĕçеп.
Сопло-комета тин цехра çунатчĕ,
Халь вăл — ракета, улшăннă веçех.
Тĕлĕнмелле курăнусем сăнарлăн
Тухаççĕ умлăн-хыçлăн куç умне.
Хура тĕксĕмлĕхрен савса сăнатăп
Эп асамат пек космос шуçăмне.
Унта та сварка çиçĕмне куратăп —
Монтажниксем ĕçлеççĕ уçлăхра.
Планетăсем енне вĕçес карапĕ,
Тен, пĕчĕкех те мар пуль уйăхран.
Ак плазма та çын ăстăнĕшĕн уçă —
Çĕн хĕвелсем çунаççĕ тӳпере.
Этем унччен курман тĕссемлĕ шуçăм
Асаматпа кĕтсе илет пире.
...Тĕнче пĕр тĕслĕ çех текен çын чухăн,
Ăна хуран çех куракан — пăван...
Асамата çичче пайланă чуххăм
Тĕссен улшăнăвне курман... айван.
Поэзин йăлтăр хунарне чĕртетĕп,
Парнелесе хаваслăх çутине:
«Куçри асаматсем, ан сӳнĕр! — тетĕп,—
Элчел сивви шăнтмасăр çын чунне».
Пепкен шевлеллĕ сывлăм тăррĕш куçĕ,
Хĕр куçĕнчи вĕри, таса хĕлхем,
Хĕрарăм куçĕ çутнă ăшă шуçăм —
Тĕлĕнмелле асаматсем хăйсем.

Çын куçĕнчен хитри çук пулĕ, чăн та,
Тĕсрен пуян илемлĕ тĕнчере!
Ан сӳнтĕр куç шăрçи, нихçан ан шăнтăр
Таса çăлкуçĕ унăн сивĕре.
Хальччен кун пек эп пурнăçа савманччĕ—
Тен, уçăлсах çитменччĕ пуль куçсем...
Тав илемӳшĕн, уçлăх асамачĕ!
Сире те тав, çак çĕр çинчи тĕссем!

ТУПМАЛЛИ

Эпир—Çĕрпе Хĕвел ывăлĕсем...

Çунаттине çупа-çупа 4
Этем, кам эс? 5
Чул тыткăнне çĕнтернĕ çăл шарлакĕ . 7
Илемлĕн викĕсленнĕ çулăмра . . 8
Эп иккĕленместĕп кун пирк . . 10
Каçхи хуркайăк-çулçӳревçĕсем . . 11
Çĕр тавра вĕçет, ӳлет . . . 13
Чăваш ун чух вĕçсĕрлĕхре вĕçетчĕ . 15
Енер анчах çак вĕтлĕхре тĕтреччĕ . 17
...Пĕр кивĕ, ятсăр шыв трамвайĕпе . 18
Тăпра тыткăнĕнчен хăтарнăскер . . 20
Шур Атăл варринче — вучах пек . 22
Киввипеле çĕннин чикки, ăçта эс? . 23
Тахçан, авал, ку пулнă имĕш. . . 24
Курни кулянтарса ярсан . . . 25
Тусанлă, чуллă, ĕнĕклĕ . . . 26
Пуриншĕн те, пуриншĕн те сана каçарăп эпĕ 28
Тасалăх кирлĕ 29
Тавралăха карса илсен каçхи тĕтре . 30
Хăйăр океанĕ 32
Эпир — Çĕрпе Хĕвел ывăлĕсем . . 33

Çĕнелӳ. Триптих. Поэмăсем

Çунатсăр çилармань 36
Никĕс 58
Алăри асамат 78

Василий Иванович АНТИПОВ
(Василий ЭНТИП)

МОЛНИЯ В РУКЕ

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Редактор В. О. Максимов
Художник В. Е. Емельянов
Художественный редактор А. А. Афиногенов
Технический редактор А. Ф. Никитина
Корректор Л. Ф. Козин

НТ 01239. Сдано в набор 5/IV-1976 г. Подписано к печати 30/VIII-1976 г. Формат 70×108/32. Бумага типографская № 1. Физ. печ. л. 3,0. Усл. печ. л. 4,20. Учетно-изд. л. 3,72. Заказ № 1128. Тираж 1500 экз. Цена 36 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Управления по делам
издательств, полиграфии и книжной торговли
Совета Министров Чувашской АССР,
Чебоксары, Канашское шоссе, 13.

С(Чув. 2)
Э 67

Энтип В. И.
Алăри асамат. Сăвăсемпе поэмăсем. Шупашкар. Чăваш кĕнеке издательстви, 1976.

96 с.

Ку кĕнекене авторăн çĕнĕ сăввисемпе поэмисем («Çунатсăр çилармань», «Никĕс», «Алăри асамат») кĕнĕ.

Сăвăç хăйĕн произведенийĕсенче коммунизм тăвакан совет çыннисен хастар ĕçне-хĕлне, вĕсен пархатарлă шухăш-кăмăлне çутатса парать.

Ф $\frac{0743-119}{M136(03)-76}$ 65—76

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1976 ç.

36 пус.

85514